Федерацин пĕтĕмĕшле вĕренӳ
енĕпе ĕçлекен вĕрентӳпе
меслетлĕх пĕрлешĕвĕн
йышăнăвĕпе
2015 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче
(2/15 №-лĕ протокол)
ЫРЛАНĂ

# Ачасене шкулччен
# вĕрентмелли тĕслĕх программа

**Куçаруçăсем:**
Артемьева Т.В., Михайлова С.Г.

Программăра шкул çулне çитмен ачасене воспитани памалли, аталантармалли тата вĕрентмелли ĕçĕн тĕллевĕсемпе задачисене, унăн содержанине, йĕркелĕвне уçса панă.

## Содержани


| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Кӳртĕм | | | | 4 |
| 1 | Программăн тĕллевлĕ пайĕ | | | 8 |
| | 1.1 | Ăнлантарни | | 8 |
| | | 1.1.1. | Программăн тĕллевĕпе задачисем | 8 |
| | | 1.1.2. | Программа уйрăмлăхĕсем, ăна никĕслекен принципсем | 10 |
| | 1.2. | Кĕтекен результатсем | | 12 |
| | | Чи пĕчĕккисен ӳсĕмĕнче кĕтекен результатсем | | 12 |
| | | Кĕçĕн ӳсĕмре кĕтекен результатсем | | 13 |
| | | Программăна харпăрланă тапхăрта кĕтекен результатсем | | 14 |
| | 1.3. | Программăпа йĕркеленĕ вĕренӳ ĕç-хĕлĕн аталантаруллă хаклавĕ | | 15 |
| 2 | Программа шалашĕ | | | 18 |
| | 2.1. | Пĕтĕмĕшле калани | | 18 |
| | 2.2 | Вĕренӳ ĕç-хĕлне ача аталанăвĕ тата вĕренӳ уçлăхĕсемпе килĕшуллĕн уçса пани | | 18 |
| | | 2.2.1. | Чи пĕчĕккисен тата кĕçĕннисен ӳсĕмĕ | 19 |
| | | | Чи пĕчĕккисен ӳсĕмĕ (2–12 уйăх) | 20 |
| | | | Кĕçĕннисен ӳсĕмĕ (1–3 çул) | 23 |
| | | 2.2.2. | Шкул умĕнхи ӳсĕм | 28 |
| | | | Социаллă хутшăну аталанăвĕ | 28 |
| | | | Ăс-тăн аталанăвĕ | 29 |
| | | | Пуплев аталанăвĕ | 33 |
| | | | Ӳнерпе илемлĕх аталанăвĕ | 35 |
| | | | Ӳт-пӳ аталанăвĕ | 36 |
| | 2.3. | Çитĕннисемпе ачасен хутшăнăвĕ | | 37 |
| | 2.4. | Педагогика коллективĕпе ачасен çемйисен хутшăнăвĕ | | 39 |
| | 2.5. | Сывлăх тĕлĕшĕнчен кăлтăк пур ачасемпе тӳрлетӳ тумалли ĕçĕн программи | | 41 |
| 3. | Йĕркелӳ ĕçĕн пайĕ | | | 44 |
| | 3.1. | Ачасене аталанма май паракан психологипе педагогика условийĕсем | | 44 |
| | 3.2. | Аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхне йĕркелени | | 45 |
| | 3.6. | Вĕренӳ ĕç-хĕлне планлани | | 49 |
| | 3.7. | Кун йĕркипе режимĕ | | 50 |
| | 3.9. | Норма тата нормăпа меслетлĕх документчĕсем | | 50 |
| | 3.10. | Литература çăлкуçĕсем | | 52 |

# Кӳртӗм

«Раççей Федерацинчи вӗренӳ çинчен калакан законпа» (декабрӗн 29-мӗшӗ, 2012, № 273 ФЗ) килӗшӳллӗ шкул умӗнхи вӗренӳ тӗп тата вăтам вӗренӳпе танах пӗтӗмӗшле вӗренӳн пӗр шайӗ шутланать. Çапла вара, халӗ шкулчченхи ача-пăча организацийӗ вӗçе-вӗç вӗренӳ системин пуçламăш пусăмӗ пулса тăрать.

Шкулчченхи ӳсӗм этем харкамлăхӗ калăпланассинче питех те пӗлтерӗшлӗ. Ку ӳсӗмре тӗрлӗ пултарулăх вăйлă аталанса пырать, тӗрӗс пахалăхсем калăпланаççӗ, характер уйрăмлăхӗсем йӗркеленеççӗ. Шăпах çак ӳсӗмре ачан сывлăхӗ никӗсленет. Унăн ӳт-пӳ уйрăмлăхӗсем йӗркеленсе аталанаççӗ. Çакă пурте ачан психика функцийӗсене тата ăс-тăнне малалала аталантармалли условисем пулса тăраççӗ.

Ачасене хальхи саманари социаллă хутлăхра хăтлă майлашма хатӗрлес задача шкулчченхи вӗренӳ шалашне кăна мар, ачасемпе аслисен хутшăнăвне йӗркелемелли мелсене те çӗнетме, вӗсен пурнăçне хăрушсăрлăхла йӗркелеме хистет.

Чи кӗçӗннисен тата шкулчченхи ачалăх тапхăрӗнчи вӗренӳ задачисене çӗнӗлле ăслани çак ӳсӗмри ачасен вӗренес мехелне, вӗсен аталанăвне йӗркелекен условисене, вӗренӳ тата аталантару стратегине, уйрăм çын пурнăçне, кунпа пӗрлех обществăн аталану тăнăçлăхне мӗнле витӗм кӳнине палăртассипе çыхăннă.

Çакă вара кӗçӗн тата шкулчченхи вӗренӳ программисене çӗнӗлле калăплама ыйтать. Çӗнӗ вӗренӳ программисем ачалăха пур енлӗ хăтлă тума май памалла.

Раççейри вӗренӳ политики хальхи вӗренӳ ӗçӗн тӗп тӗллевӗсене палăртса пырать. Вӗсем вӗренӳ пахалăхне тивӗçлӗ шая çӗклеме, кашни çыннăн çӗнӗлӗх пултарулăхне вăйлатма тивӗç. Çакă обществăпа патшалăхăн хальхи тата малашнехи çивӗч ыйтăвӗсене тивӗçтерме кирлӗ. Тӗллевсене пурнăçлама хутшăнăвăн информаци технологийӗсене çине тăрса ӗçе кӗртмелле. Пӗтӗм этемлӗх, уйрăм халăх, наци пухса упранă хаклăхсем, этемӗн ирӗклӗ аталанăвӗ малти вырăнта тăмалла. Кашни ачана вӗренме, вӗренӗвӗн тӗрлӗ мелӗпе усă курма майсем туса памалла. Ачана психологи тата педагогика вӗрентнӗ пек тимлӗ асăрхаса тăмалла, ăна пур енӗпе те сыхламалла. Ку вăл педагогика процесне йӗркелесе пымалли никӗс пулса тăрать. Çакă вара шкулчченхи воспитани концепцине пурнăçа кӗртмелли çӗнӗ çулсем шырама, ачасене шкулччен воспитани парса вӗрентмелли хальхи программăна улшăнусем кӗртме кирлине кăтартать.

Вĕренĕвĕн наци-регион хутлăхĕнчи уйрăмлăхсене, çавăн пекех нумай культура çыхăнулăхне те шута илес пулать.

Программăра педагогика процесĕ пĕр пĕтĕмлĕ пулмаллине тĕпе хунă. Ачана воспитани парасси, вĕрентесси тата аталантарасси тачă çыхăнса тăмалла. Çакă общество ыйтăвĕсене те, уйрăм çыннăн аталану нушисене те тивĕçтермелле.

Вĕренӳ содержанийĕнче унпа çыхăннă чи кирлĕ ĕç-хĕл тĕсĕсене, вĕсен çыхăнăвне кăтартса панă: ӳт-пĕве тĕреклетесси, ăс-пĕлӳ хывасси, пуплеве аталантарасси, хутшăнма вĕренесси, вăййа-кулла хутшăнасси, япаласемпе кулленхи пурнăçра усă курма хăнăхасси. Çакă пĕтĕмпех ачана пур енлĕн, çураçуллăн аталанма май парать.

Пĕчĕк ача хăй кам иккенне тĕрĕс ăнланса илесси, вăл пултаруллă та пуçаруллă, харкам пулса ӳсесси вĕренӳ ĕçĕн хальхи тĕллевĕсене мĕнле пурнăçланинчен килет. Çакна шута илсе программăра воспитанипе аталанăвăн тивĕçлĕ задачисене палăртнă, ача чунĕн пахалăхĕ епле пулмаллине, унăн шухăш-кăмăл аталанăвне кăтартса панă.

Вĕренӳ ăнăçлăхĕ, тĕпрен илсен, вĕрентекен пултарулăхĕнчен килет. Çакна шута илсе программа тытăмĕнче вĕренӳ содержанине пурнăçлассипе çыхăннă воспитанипе вĕрентӳ задачисене уйрăмах пысăка хунă. Педагогика ĕçĕ-хĕлĕ кашни вĕренекенпе пайăррăн ĕçлемеллине, кашни ачан туртăмĕсене, хăйне майлă психика-физиологи уйрăмлăхĕсене шута илмеллине кăтартать. Кунсăр пуçне ача кил-йышĕнчи лару-тăрăва, нуши-тертне, унăн çывăх таврашлăхне шута илес пулать. Çакă ача-пăчапа професси тĕлĕшĕнчен тĕрĕс ĕçлемелли тĕп никĕс пулса тăрать.

Ачана вĕрентекенпе, юлташĕсемпе активлă хутшăнма хавхалантарасси, çут çанталăк тата ăс-хакăл пулăмĕсемпе паллашас кăмăл-туртăмне ӳстересси – педагогикăн тĕп тĕллевĕ. Тĕнчене, унăн нумай енлĕ пулăмĕсемпе пахалăхĕсене, вĕсен çыхăнăвĕсене ача шăпах ĕнтĕ ыттисемпе çыхăнса-хутшăнса ăса хывать, çакă ăна харкамăн тĕнчери вырăнне ăнланса илме май парать. Çапла май ача пĕтĕм общество пурнăçне кĕрсе пырать.

Шкулччченхи ача-пăча учрежденийĕнче педагогика ĕçне-хĕлне йĕркеллĕн, килĕшӳллĕн туса пымалли никĕс вăл – ача-пăчана ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен сывă, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен таса ӳстерме майсем туса пани. Ача пĕлӳлĕх тĕнчине канăçлăн, хăйне ăс çемми тата вăй çемми ĕç-пуç урлă кĕме пултартăр.

Ку чухнехи шкулччченхи ача-пăча учрежденийĕ вĕçе-вĕç вĕренӳ системин пуçламăш пусăмĕ пулса тăрать терĕмĕр. Вĕренӳ тĕллевĕсемпе

задачисене, унӑн содержанине палӑртнӑ май вӑл гуманизмпа килӗшсе тӑракан пӗтӗмӗшле тата наци культурин хаклӑхӗсене тӗпе хурать, ачана чӑн-чӑн этем пулса ӳсме, унӑн пултарулӑхне уҫса пама пулӑшать. Наци культурине чуна хывма тӑван чӗлхепе, литературӑпа, халӑх историйӗпе паллашни ҫеҫ ҫителӗксӗр. Шкулчченхи учрежденин пӗтӗм пурнӑҫӗнче наци шухӑш-кӑмӑлӗ палӑрса тӑмалла. Ҫавӑнпа та ку учрежденисен ӗҫӗнче халӑх педагогики паллӑ вырӑн йышӑнма тивӗҫ.

Ача халӑх культури ҫинче ӳссе ҫитӗнесси вӑл харпӑр наци культурин пулӑмӗсемпе пахалӑхӗсене пӗлсе ӑнланни, чунтан йышӑнни ҫинче никӗсленсе тӑрать. Ҫавӑнпа та вӗренӳ ӗҫне-хӗлне ачан наци тивӗҫлӗх туйӑмне аталантарас, ҫӗр-шывӑн наци пуянлӑхӗсене, тӑван чӗлхене, культурӑна, тӑван халӑх традицийӗсене упрама вӗрентес тӗллевпе туса пымалла. Ҫапла ӗҫлесен ача ытти халӑхсен ҫыннисене ӑнланма, хисеплеме хӑнӑхать. Ҫакӑ вӑл чӑннипех гуманизмлӑ педагогикӑпа килӗшсе тӑрать.

Шкул ҫулне ҫитмен ачасене вӗрентмелли программӑра ҫамрӑк ӑрӑва харпӑр хӑй халӑхне тата пӗтӗм этемлӗхе хисеплес туйӑмпа ӳстерме кирлине палӑртнӑ. Ҫакӑнтан тухса тӑраҫҫӗ те ӗнтӗ ачана общество пурнӑҫне хутшӑнма хатӗрлемелли педагогика тӗллевӗсем. Ҫавна май пӗчӗк ачана таврари ҫут ҫанталӑкпа паллаштарасси, кулленхи пурнӑҫра кирлӗ малтанхи пӗлӳсемпе ӗҫ хӑнӑхӑвӗсем пухасси вырӑс, чӑваш, тутар, мордва т.ыт. нацисен культура хутлӑхӗнче пулса пырать. Наци хутлӑхӗнче социаллӑ ҫыхӑнусем обществӑн чи кӗҫӗн, пуҫламӑш шайӗнчех шкулчченхи вӗренӳ учрежденийӗнче, ҫемьере, таврара пурӑнакан ҫынсен хутшӑнӑвӗнче палӑраҫҫӗ – ҫакна наци-регион шайӗ теме пулать. Ку ҫыхӑнусем пӗтӗм халӑх, ҫӗр-шыв, планета шайӗнче те палӑраҫҫӗ – ҫакна пӗтӗм этемлӗх шайӗ теме пулать.

Программӑн мӗн пур пайӗн содержанийӗнче ача-пӑча фольклорӗ тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫапла туни тӗрӗсех: шкул ҫулне ҫитмен ачасен пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ пур аталану тапхӑрӗнче те халӑх сӑмахлӑхӗпе тачӑ ҫыхӑннӑ, шӑпах ҫакӑ ӗнтӗ тӗнчене курӑмлӑ сӑнарсем урлӑ, кӑмӑл-туйӑм урлӑ пӗлсе тӑма май парать. Фольклор – ачана тивӗҫлӗ педагогика витӗмӗ кӳмелли чи хӑватлӑ хатӗр, вӑл пулӑшнипе ача чунӗнче этемӗн чи пархатарлӑ енӗсене – ырӑ кӑмӑла, юмартлӑха, хӗрхенӳлӗхе т.ыт. аталантарма пулать. Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ ушкӑнри ачасене пӗр-пӗринпе хутшӑнмалли питӗ паха мел пулса тӑрать, кашни пепкенех хӑй йышӗнче тивӗҫлӗ ҫын пулма май парать.

Программăра краеведени материалĕсемпе, тăван çĕр çинче пурăнакан пур халăхăн ӳнер хайлавĕсемпе анлăн усă курма пăхнă. Çак материалсем кашни ачан пултарулăх хевтине уçса парса аталантарма май параççĕ.

Программа шалашĕ шкул умĕнхи вĕренĕвĕн Федераци вĕренӳ стандарчĕ ыйтнипе килĕшӳллĕ виçĕ тĕп пайран тăрать: тĕллевлĕ пайĕ, шалашĕ, йĕркелӳ пайĕ.

*Тĕллевлĕ пайĕнче* ĕç тĕллевĕпе задачисене, принципсене, кĕтекен результатсене панă.

Шалаш пайĕнче пилĕк вĕренӳ уçлăхĕнчи – «Социаллă хутшăну аталанăвĕ», «Ăс-тăн аталанăвĕ», «Пуплев аталанăвĕ», «Ӳнерпе илемлĕх аталанăвĕ», «Ӳт-пӳ аталанăвĕ» – ĕç-хĕлсене çырса кăтартнă.

Программăра вĕренӳ уçлăхĕсенчи тĕрлĕ ĕç-хĕл шалашне палăртнă:

– вăййă (сюжетлă тата рольлĕ вăййă, правилăсемлĕ вăййă тата ыт. те);

– хутшăну. Аслисемпе тата ытти ачасемпе хутшăнни;

– пĕлӳ-тĕпчев;

– социаллă тата çут çанталăк тĕнчине сăнаса та, хутшăнура та тĕпчени.

Кунпа пĕрлех çак хастарлăх тĕсĕсене те палăртнă:

– халăх сăмахлăхне тата илемлĕ литературăна йышăнни;

– харпăр хăйне пăхни, кулленхи ансат ĕçсем туни;

– тĕрлĕ материалпа конструкцилени (конструкторсем, модульсем, хут, çут çанталăк материалĕ);

– ӳнер (ӳкерни, йăвалани, аппликаци);

– кĕвĕ (музыка хайлавĕсене туйăмлă йышăнни, ăша хуни, юрлани, ритмпа çемĕ хусканăвĕсем, ача-пăча музыка инструменчĕсемпе калани);

– хускану (тĕп хусканусене харпăрлани).

*Йĕркелӳ пайĕнче* вĕренӳ ĕç-хĕлне епле йĕркелессин условисен системине çырса кăтартнă.

Программăпа Чăваш Республикинчи тата Раççей Федерацийĕн чăвашсем йышлăн пурăнакан ытти регионĕсенчи шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче усă курма пултараççĕ.

Вĕренӳ тĕллевĕсемпе задачисене, унăн содержанине палăртнă май программăра гуманизмпа килĕшсе тăракан пĕтĕмĕшле тата наци культурин хаклăхĕсене тĕпе хуни ачана чăн-чăн этем пулса ӳсме, унăн пултарулăхне уçса пама пулăшать. Шкулчченхи организацин пĕтĕм пурнăçĕнче наци шухăш-кăмăлĕ палăрса тăмалла.

Шкул çулне çитмен ачасене вĕрентмелли программăна Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви хушнипе,

Чăваш Республикинче вĕренӳ ĕçне аталантармалли тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн калăплана.

# 1. ПРОГРАММĂН ТĔЛЛЕВЛĔ ПАЙĔ

## 1.1 Ăнлантарса пани

Программăри идейăсен пуххи концепци пĕлтерĕшлĕ. Унăн тĕллевĕ – ачасен шкулчченхи вĕренĕвне пĕр çирĕп йĕркене пăхăнтарасси мар. Ăна вĕренĕвĕн тĕп задачисене вĕренӳ содержанийĕн федераллă пайĕпе тата наци-регион пайĕпе килĕшӳллĕн татса памалли никĕс вырăнне хумалла. Шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсен педагогика коллективĕсем, наци-регион компоненчĕн содержанине шута илсе, программăн уйрăм пайĕсене улшăнусем кĕртме пултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех программăн мĕн пур пайĕн пĕр пĕтĕмлĕхĕпе çыхăнулăхне сыхласа хăварас пулать.

### 1.1.1. Программăн тĕллевĕпе задачисем

Программа тĕллевĕ – ача аталăнăвĕн социаллă лару-тăрăвне, аталантаракан вĕренӳ хутлăхне, ачан харкамлăхне хутшăну урлă аталантарас мехелсене, вăйă тата пĕлӳ-тĕпчев ĕç-хĕлне ытти активлă формисене калăпласси. Ачан çул ӳсĕмĕпе тата пайăр уйрăмлăхĕсемпе килĕшӳллĕн, унăн ӳт-пĕвĕпе ăс-хакăлне пур енлĕн аталантарасси, пулас харкам культурин, наци хăй евĕрлĕхĕн, пултарулăх аталанăвĕн тĕп никĕсне хывасси.

Программа тĕллевне пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă пайăр задачăсем уçса параççĕ:

– кашни ачан ӳт-пӳпе ăс-хакăл сывлăхне упрасси тата пиçĕхтерессе, унăн кăмăл-туйăмне çирĕплетме, ачана кашни тапхăрта пур енлĕ аталантарма тăрăшасси, харпăр хăй аталанăвĕн майĕсене тупма пулăшасси, сывлăхлă пурнăçпа пурăнма хăнăхтарасси;

– ачана таврари тĕнчепе, ытти çынсемпе кирлĕ пек хутшăнма вĕрентесси, харпăр хăйне тĕрĕс хак пама хăнăхтарса пырасси; пĕлӳлĕх туртăмĕсене, пултарулăхĕсене, ыйтăвĕсене аталантарасси;

– ачан пайăр уйрăмлăхĕсене упраса çирĕплетесси; пуçарулăхне, пĕлес кăмăлне, ирĕклĕхне, пултару хевтине аталантарасси;

– шкулчченхи вĕренĕве тивĕçлĕ шайра тытса пырасси; халăхăн тĕрлĕ сийĕнчи ачасен тата вĕсен ашшĕ-амăшĕн вĕренӳ ыйтăвĕсене тивĕçтерессе;

– кашни ачана вăл ăçта пурăннине, хăш халăхран пулнине, чĕлхине, арлăхне пăхмасăр пĕр тан та пур енлĕн аталанса пыма майсем туса парасси;

– вĕренӳ тата ăспару процесне чунпа этемлĕх хаклăхĕсем çинче никĕсленсе пĕрлĕхлĕ туса пырасси;

– социокультура хутлăхне ачасен ӳсĕм тата харкам уйрăмлăхĕсене шута илсе калăпласси.

Шкул çулне çитмен ачасене вĕрентмелли тĕллевпе задачăсене пурнăçлама тивĕçлĕ психологи тата педагогика майĕсем пулмалла:

– ушкăнсенчи мĕн пур ачапа гуманизм принципĕ хушнă пек ырă кăмăллă пулмалла, çакă вĕсен хутшăну туртăмне вăйлатать, ырă пулма, пĕлĕве ӳстерме, пуçарулăхне палăртма, харпăр хăй тĕллĕн ĕç тума хăнăхтарать;

– ача-пăча ĕçĕ-хĕлĕн тĕрлĕ тĕсĕпе туллин усă курмалла, вĕсене çыхăнтарса пымалла, çак майпа вĕренӳ ĕçĕн культура тĕлĕшĕнчи содержанине ӳстермелле;

– воспитани ĕçĕнче халăх педагогикипе анлă усă курмалла;

– вĕренӳ материалĕн тĕрлĕ варианчĕпе усă курмалла; çакă кашни ача пултарулăхне унăн интересĕсемпе тата кăмăл-туртăмĕсемпе килĕшӳллĕн аталантарма май парать;

– ачасене çитĕннисемпе тата хăйсенчен кĕçĕнреххисемпе те, аслăраххисемпе те тĕрлĕрен йышши хутшăнусене явăçтармалла;

– ачасене шкулччченхи вĕренӳ организацийĕнче тата çемье условийĕсенче воспитани парассине килĕшӳллĕн шайлаштарса пымалла, çемьен хăй ачи çӳрекен ушкăн ĕçне тата шкулччченхи организацин пĕтĕм ĕçне хутшăнмалла;

– çитĕннисен кашни ачапа унăн кăмăл-туйăмне шута илсе хутшăнмалла;

– кашни ачана хăй кăмăлне каякан ĕç хатĕрĕ, юлташ тата ыт. те суйласа илме май памалла;

– ача ăнăçу тунине педагогика тĕлĕшĕнчен хак панă чухне унăн хальхи ĕç-хĕл шайне умĕнхипе танлаштармалла;

– вĕренӳ культура тĕлĕшĕнчен пуян, нумай енлĕ лару-тăрура иртмелле; çакă ача кăмăлне тивĕçтерет, хаклав пултарулăхне аталантарать, обществăри хăйĕн вырăнне ăнланма пулăшать, пĕлӳлĕх туртăмне ӳстерет, илемлĕхе туйма-ăнланма хăнăхтарать, унăн харкамлăхне упраса хăварать;

– ача аталанăвĕнче, вĕренӳ ĕçне йĕркелессинче вăйă тĕп вырăн йышăнса тăмалла;

– илтнине улăштармасăр каласси пултару ĕçĕпе, ушкăнлă ĕçпе тата уйрăмшарăн ĕçленипе, куçăмлă вăйăсемпе тата ларса ĕçленипе килĕшӳллĕн çыхăнса тăмалла.

Организаци хăйĕн тĕп вĕренӳ программине калапланă чухне литература çăл куçĕсен списокĕнче кăтартнă вĕренӳ программисем çинче

никĕсленме, çавăн пекех программа калăплама Стандартпа килĕшсе тăракан меслетлĕх тата ăслăлăх ĕçĕсемпе те усă курма пултарать.

### 1.1.2. Программа уйрăмлăхĕсем, ăна никĕслекен принципсем

Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе шайлашуллă Программа çак принципсем çинче никĕсленнĕ:

*1. Ачалăх тĕрлĕ енлĕхне тытса пырасси.* Хальхи тĕнче нумай енлĕхпе тата уçăмсăрлăхпа палăрса тăрать. Çакă этемпе обществăн пурнăçĕн тĕрлĕ пайрăмĕнче курăнать. Раççей Федерацийĕ анлă талккăшлă патшалăх. Вăл тĕрлĕ культурullă халăха пĕрлештерет. Обществăри, экономикăри, культурăри, вĕренӳри улшăнусем хăвăрт пулса пыни çынсене нумай енлĕ тĕнчере майлашăнма, харкамлăхне упраса хăварас мехелне аталантарма, çав вăхăтрах ыттисемпе тăнăç хутшăнма, харкам суйлав пултарулăхне аталантарма, ыттисен пахалăх суйлавне хисеплеме вĕренсе пыма хистет. Çакна кура вĕренӳ ĕç-хĕлне регион уйрăмлăхĕсене, социо-культура лару-тăрăвне, ачасен ӳсĕм тата харкам уйрăмлăхĕсене, пахалăхĕсене шута илсе йĕркелемелле.

*2. Ачалăх хăй хаклăхне тата хăй евĕрлĕхне кашни çыннăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕнчи пĕлтерĕшлĕ тапхăр пек упрани.*

Ачалăх хăй хаклăхĕ – ачалăх тапхăрне этем пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ вăхăт пек йышăнни тата пуçламăш тапхăр малашнехи пурнăçа пысăк витĕм кӳнине шута илни. Çакна тĕпе хурса ачана кашни тапхăра тулли пурăнса ирттерме (амплификаци) майсем туса памалла.

*3. Килĕшӳллĕ, меллĕ социализаци* ача культура нормисене, ĕç-хĕл хатĕрĕсемпе мелĕсене, тыткалу тата культура тĕслĕхĕсене харпăрласси; çемье, общество тата патшалăх йăли-йĕркисене вĕренсе пырасси çитĕннисемпе тата ытти ачасен çыхăнăвĕнче пулса пымаллине пĕлтерет. Çакă ăна улшăнса тăракан тĕнчере пахалăхлă ĕçлеме майсем туса пама пулăшать.

*4. Аслисемпе ачасен хутшăнăвĕ харкам аталануллă тата гуманизмлă характерлă пулни.* Çакăн пек хутшăну ачасен харкамлăхне йышăнма тата хисеплеме, ача патне тимлĕ пулма, унăн кăмăл-туйăмне, интересĕсене, хутшăнура кашнин тăнăçлăхне хисеплесе шута илме хистет. Çакă вăл ачана пур енлĕн аталантарассин, унăн шухăш-туйăм тăнăçлăхне упрассин тĕп условисен шутĕнче.

*5. Ача вĕренӳ ĕç-хĕлне туллин хутшăнма пултарни.* Ку принциппа килĕшуллĕ вĕренӳ процесĕн пур субъекчĕ те – ачасем, çитĕннисем – программăна пурнăçлама активлă хутшăнаççĕ. Кашниех вăйăра, занятинче,

проектра, сӳтсе-явура, вӗренӳ ӗҫӗнче хӑйӗн кӑмӑлне палӑртма пултарать. Ачасем те ӳсӗм мехелӗпе шайлашуллӑ хӑйсен курӑмне, кӑмӑлне палӑртма пултармалла.

*6. Оганизаци ҫемьепе пӗрлӗхлӗ ӗҫлени, ҫемьепе хутшӑну уҫӑмлӑ пулни, ҫемье пахлӑхӗпе йӑли-йӗркине хисеплесе вӗсене вӗренӳ процесӗнче шута илни программӑн тӗп принципӗсенчен пӗри шутланать.*

Организацин ӗҫтешӗсен ача ҫемйинчи условисене пӗлсе тӑмалла, унта пулакан улшӑнусене ӑнланса, ҫемьери пахалӑхсемпе йӑла-йӗркесене хиспелесе ӗҫлемелле.

*7. Ача аталӑнӑвне тата вӗрентӗвне хутшӑнакан, сывлӑхне упракан тӗрлӗ организаципе тата партнӗрсемпе пӗрлӗхлӗ хутшӑнса ӗҫлени, ҫавӑн пекех вырӑнти общесвтӑн ресурсӗсене ачан аталанӑвне пуянлатас тӗлӗшпе усӑ курни.* Организаци, ачасен социаллӑ тата культурӑллӑ опытне пуянлатма, ҫемьепе кӑна мар, халӑх йӑли-йӗркисене харпӑрлама пулӑшакан ытти организацисемпе тата уйрӑм ҫынсемпе ӗҫлӗ хутшӑнусем йӗркелет. Вӗсемпе пӗрле тӗрлӗ проект, экскурсисем, уявсем ирттерме пулать. Кирлӗ чухне вӗсене ачасене психологипе педагогика пулӑшӑвӗ парас, сывлӑха упрас ӗҫе явӑҫтарма пулать.

*8. Ачан пайӑр уйрӑмлӑхӗсене шута илни.* Ҫак принцип вӗренӳ процесӗнче ачасен харкам уйрӑмлӑхӗсене анлӑ шута илме, кашни ачан харкам аталану ҫул-йӗрне палӑртма май парать. Ачан вӗренӳ шалашне йӗркеленӗ, активлӑх формисене суйланӑ чухне унӑн кӑмӑлне шута илнин пӗлтерӗшӗ ӳсет. Ҫакна тытса пыма ача аталанӑвне сӑнасах тӑмалла, унӑн ӗҫӗпе хӑтланӑшӗсене куллен тишкермелле, йывӑр лару-тӑрура пулӑшса пымалла, хӑйӗн кӑмӑлне каякан ӗҫ-хӗл суйлама майсем туса памалла.

*9. Вӗренӳ ачасен ӳсӗмӗпе килӗшӳллӗ пулни.* Педагогсен, ку принциппа шайлашуллӑ, шкулчченхи вӗренӳ содержание, меслечӗсене ачасен ӳсӗм уйрӑмлӑхӗсене шута илсе палӑртмалла. Вӗсен ӳсӗмне тивӗҫекен пур ача-пӑча ӗҫ-хӗлӗсемпе (вӑйӑ, хутшӑну тата пӗлӳ-тӗпчев ӗҫ-хӗлӗсем, ӑславлӑх активлӑхӗ) анлӑ усӑ курмалла. Педагог ӗҫ-хӗлӗ ачасен аталанӑвӗн саккунӗсемпе килӗшӳллӗ пулса пымалла.

*10. Вариативлӑ аталантаруллӑ вӗренӳ.* Ку принциппа килӗшӳллӗ вӗренӳ содержанине ачасен тӗрлӗ ӗҫ-хӗл урлӑ харпӑрлас мехелне, вӗсен интересӗсемпе пултарулӑхне кура палӑртмалла. Педагогӑн ачан малашнехи аталанӑвне шута илсе ӗҫлемелле.

*11. Вӗренӳ содержанийӗ тулли пулни, уйрӑм вӗренӳ уҫлӑхӗсене пӗрлештерме май килни.* Программӑра стандартпа килӗшӳллӗн ачасен социаллӑ хутшӑну, пӗлӳ, пуплев, ӳнерпе илемлӗх, ӳт-пӳ аталанӑвне вӗсен

хавхалануллӑ вӑй-хӑвачӗ урлӑ йӗркелесе пыма палӑртнӑ. Программӑна вӗренӳ уçлӑхӗсене пайлани ача кашни вӗренӳ уçлӑхне шкулти пек уйрӑм занятисенче харпӑрламалллине пӗлтермест.

Программӑн кашни уйрӑм пайӗ тӗрлӗ енлӗ çыхӑннӑ: пӗлӳлӗх аталанӑвӗ, пуплев тата социаллӑ хутшӑну, ӳнерпе илемлӗх, пӗлӳлӗхпе пуплев тата ыт. те.

*12. Программа идейӑсен пуххи, концепци пӗлтерӗшлӗ.* Унӑн тӗллевӗ – ачасен шкулччен хи вӗренĕвне пӗр çирӗп йӗркене пӑхӑнтарасси мар. Ӑна вӗренĕвӗн тӗп задачисене вӗренӳ содержанийӗн федераллӑ пайӗпе тата наци-регион пайӗпе килӗшӳллӗн татса памалли никӗс вырӑнне хумалла. Шкулччен хи вӗренӳ учрежденийӗсен педагогика коллективӗсем, наци-регион компоненчӗн содержанине шута илсе, программӑн уйрӑм пайӗсене улшӑнусем кӗртме пултараççӗ. Анчах çакна май программӑн мӗн пур пайӗн пӗр пӗтӗмлӗхӗпе çыхӑнулӑхне сыхласа хӑварас пулать.

Программӑпа Чӑваш Республикинчи тата Раççей Федерацийӗн чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан ытти регионӗсенчи шкулччен хи вӗренӳ организацийӗсенче усӑ курма пултараççӗ.

## 1.2. Кӗтекен результатсем

Шкул умӗнхи вӗренĕвӗн Федераци патшалӑх вӗренӳ стандарчӗпе килӗшӳллӗн шкулччен хи ачасенчен конкретлӑ вӗренӳ ӳсӗмӗсем ыйтмаççӗ. Çакна шута илсе программӑра кӗтекен результатсене тӗллев ориентирӗсем пек панӑ. Вӗсем ачасен вӑл е ку ӳсӗмри çитӗнӗвӗсен характеристикисем пулаççӗ.

Программӑн вӗренӳ тӗллевӗпе задачисем çав тӗллев ориентирӗсене пурнӑçлассипе çыхӑннӑ. Ачан аталанӑвӗн тӗп характеристикисене вӗсен тӗрлӗ ӳсӗмре харпӑрлама пултаракан çитӗнӗвӗсем пек панӑ. Психика аталанӑвне шута илсе тапхӑрлани çине никӗсленсе шкулччен хи ачалӑх виçӗ ӳсӗм çине пайланать: чи пӗчӗккисен ӳсӗмӗ (ача пурнӑçӗн пӗрремӗш тата иккӗмӗш çур çулӗсем), кӗçӗн ӳсӗм (пӗр çултан виçӗ çулччен) тата шкулччен хи ӳсӗм (виççӗрен çичӗ çулччен).

**Чи пӗчӗккисен ӳсӗмӗнчи тӗллев ориентирӗсем**

*Пӗрремӗш çур çул вӗçне:*

– ача аслисемпе хутшӑнас кӑмӑлне уççăн кӑтартни: хӑйпе калаçнипе кӑсӑкланать, уншӑн хӗпӗртет; сасӑпа, кулӑпа, хусканупа аслисене хӑйпе хутшӑнма чӗнет; аслисем пуçаракан вӑйӑсене хаваспах хутшӑнать;

– ачан хӑй таврашне пӗлес хавхи паларни: теттесемпе, япаласемпе кӑсӑкланать, вӗсене куҫарнине сӑнать, сасӑ янравне тимлет, теттене хавасланса алла илме ӑнтӑлать, ӑна сӑнать.

*Пӗрремӗш ҫултӑлӑк вӗҫӗнче:*

– ача туйӑмлӑ хутшӑнма ӑнтӑлни, аслисен кӑмӑл-туйӑмне сисес, пуплев интонацине, сӑмахсен пӗлтерӗшне ӑнкарас-уйӑрас пултарулӑхӗ аталанни; ҫывӑх ҫынсене уйӑрма пултарни;

– тӗрлӗ япалапа интересленни, вӗсемпе кулленхи ӗҫ урлӑ паллашни, аслисен ӗҫӗсене-хӑтланӑшӗсене евӗрлени, харкам кӑмӑлне каякан теттесене аслисенчен илме ҫине тӑни, вӗсемпе хӑйсем тӗллӗн выляма пултарни;

– аслисемпе хутшӑннӑ май тӗрлӗ хутшӑну хатӗрӗсемпе усӑ курни: пит-куҫ вылявӗ, ура хусканӑвӗ, сас пани (пуплешет, пӗрремӗш ҫӑмӑл ансат сӑмахсем калать); аслисене хӑйпе тӗрлӗ теттепе выляттарма хистени; хӑй хӑтланӑшӗсене аслисем ырлани-сивленине уйӑрни;

– ача-пӑча сӑвви-юррине, тӗрлӗ музыка инструментне каланине хавасланса итлени, ӳкерчӗксене сӑнаса унта мӗн ӳкернине паллани, аслисем ыйтнипе вӑл е ку япалана кӑтартни, хӑйне пурӑпа тата кӑранташпа усӑ курма хӑнӑхтарни;

– харпӑр хӑйне пӑхмалли хӑнӑхусене харпӑрлама тӑрӑшни (кашӑкпа ҫиет, чей чашкинчен ӗҫет тата ыт.те);

– хускану активлӑхӗ ӳсни: ирӗклӗ хускалать, ларать, упаленет, ура ҫине тӑрать, аслисем пулӑшнипе пӗрремӗш утӑмсем тӑвать.

### Кӗҫӗн ӳсӗмри тӗллев ориентирӗсем

*Виҫӗ ҫул тӗлне:*

– таврари япаласемпе кӑсӑкланни, вӗсене сӑнани-тӗпчени, тӗрлӗ мелпе усӑ курма хӑтланни. Кулленхи пурнӑҫра усӑ куракан япаласем мӗн тума кирлине пӗлни, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма пултарни (кашӑк, тура тата ыт.те), харкам ӗҫне вӗҫне ҫитерме ӑнтӑлни;

– аслисемпе хутшӑнма ӑнтӑлни, вӗсемпе тӗрлӗ лару-тӑрура мӗнлерех хутшӑннине ӑнланни, вӗсен хӑтланӑшӗсемпе ӗҫӗсене евӗрлесе пӗрле шайлашуллӑ тума пултарни;

– активлӑ тата пассивлӑ пуплеве харпӑрлани: аслисен пуплевне ӑнланать, ыйтма тата йӑлӑнма пултарать, таврари япаласемпе теттесен ячӗсене пӗлет;

– тантӑшӗсемпе кӑсӑкланма пуҫлани: вӗсен хӑтланӑшӗсене сӑнать тата евӗрлет. Тантӑшӗсемпе туйӑмлӑ хутшӑнать;

– кӗске вӑйӑсенче аслисен хӑтланӑшӗсене харпӑрласа евӗрлет. Вӑйӑра кирлӗ япаласене урӑххисемпе улӑштарса усӑ курать;

– кулленхи вӑйӑсенче хӑй тӗллӗн выляма пултарни, харкама пӑхас ансат хӑнӑхусене харпӑрлани;

– сӑвӑ-юрӑ, ансат кӗске калав-юмах итлеме, ӳкерчӗксем сӑнама, кӗвӗ май хускалма юратни. Продуктивлӑ ӗҫ-хӗлсене хаваспа хутшӑнни (ӳнерпе конструкци ӗҫӗ-хӗлӗ тата ыт те);

– пур кӑмӑлтан хускални – утать, тӗрлӗ еннелле чупкалать, тӗрлӗ хускану тума ӑнтӑлать (сикет, урлӑ каҫать, ҫӳле хӑпарать тата ыт. те).

**Программӑна харпӑрланӑ тапхӑрти тӗллев ориентирӗсем**

*Ҫичӗ ҫул тӗлне:*

– ача тӗп ӗҫ-хӗл мелӗсене харпӑрлани; вӑйӑра, хутшӑнура, конструкци тата ытти ача-пӑча ӗҫ-хӗлӗнче активлӑ пуҫарулӑх тата хӑйтӗллӗнлӗх кӑтартни; хӑй валли ӗҫ, пӗрле ӗҫлекенсене суйлама пултарни;

– ача тӗнчене, харкама, ытти ҫынсене ӑшпиллӗн йышӑнни, унӑн харкам тӑнӑҫлӑх туйӑмӗ пурри. Вӑл аслисемпе тата тантӑшӗсемпе активлӑ явӑҫни, пӗрлӗхлӗ вӑйӑсене хутшӑнни. Ыттисен туйӑмӗсемпе интересӗсене шута илме, калаҫса татӑлма, вӗсен ҫитӗнӗвӗсемшӗн савӑнма, инкек-синкекӗсемшӗн пӑшӑрханма пултарни. Харкам туйӑмӗсене вырӑнлӑ палӑртни, хирӗҫӳсене ҫураҫуллӑ татса пама тӑрӑшни;

– ачан шухӑш вӗҫевӗ аталанни. Ҫакӑ тӗрлӗ ӗҫ-хӗлте, вӑйӑра палӑрни. Ача тӗрлӗ вӑйӑ выляма пӗлни, ятарласа калӑпланӑ тата чӑн-чӑн пурнӑҫри лару-тӑрӑва уйӑрма пултарни, вӑйӑсен йӗркине тытса пыма хӑнӑхни;

– ача ҫыхӑнуллӑ пуплеве самай лайӑх харпӑрлани, хӑйӗн шухӑшне, кӑмӑл-туйӑмне палӑртма, хутшӑнура харкам пуплевне калӑплама, сӑмахсене сасӑсем ҫине уйӑрма пултарни, вӗсен хутла вӗренессин никӗсӗ калӑпланса пыни;

– ачасен шултра тата вӗтӗ моторика аталанни: вӑл чӗрӗ, чӑтӑмлӑ; тӗп хусканусене харпӑрланӑ, хӑйӗн хусканӑвӗсене тӗрӗслесе тӑма пултарать;

– ача ҫирӗппӗн, вӑй хурса тӑрӑшма; тӗрлӗ ӗҫ-хӗлте аслисемпе тата тантӑшӗсемпе хутшӑннӑ май харкама тытмалли социаллӑ нормӑсемпе правилӑсене пӑхӑнма; хӑрушсӑрлӑх тыткаларӑш тата харпӑр хӑй гигиени правилисене тытса пыма пултарни;

– ачан темӗн те пӗр пӗлес килни аталанса пыни: аслисемпе тантӑшӗсене ыйтусем парать; пулӑмсен ҫыхӑну хутшӑнӑвӗсемпе, сӑлтавӗсемпе интересленет; харкам тӗллӗн ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене, ҫынсен тыткаларӑшӗсене сӑлтавлама хӑтланать. Сӑнама, тӗпчеме, туса пӑхма, таврари чӑнлӑха ӳкерме ӑнтӑлни; харкам ҫинчен, хӑй пурӑнакан ҫут ҫанталӑк тата социаллӑ тӗнче ҫинчен ансат пӗлӳ харпӑрлани. Ача-пӑча литература

хайлавĕсемпе паллашни, чĕрĕ çут çанталăк, естествознани, математика, истори тата ыт. те уçлăхĕсенчи ансат ăнлавсемпе паллашни. Тĕрлĕ ĕç-хĕлсенче харпăрланă пĕлӳ-ăслайĕсем çинче никĕсленсе харкам йышăнăвне палăртма пултарни.

Çӳлерех кăтартнă пахалăхсемпе пултарулăхсен шайĕ тата вĕсене палăртас мехел уйрăм ачан, ун пурнăç шайĕн тата харкам уйрăмлăхĕсен витĕмне кура, самай тĕрлĕ пулма пултарать.

Программа шкулчченхи ачасен харкам аталанăвĕн пĕтĕмĕшле саккунĕсене тата ăнăçлă аталану тапхăрĕсене шута илни çинче никĕсленет.

Сывлăх енчен кăлтăк пур ачасемпе сусăр ачасен пуплев, пĕлӳлĕх тата социаллă аталанăвĕн пахалăхĕ тĕрлĕ пулма пултарать. Хавшак сывлăхлă ачасем пур организацисенче вĕренĕвĕн тĕп программинче тĕллев ориентирĕсене палăртнă чухне ачан ӳсĕм уйрăмлăхĕсемсĕр пуçне унăн харкам аталанăвне те, сывлăх тĕлĕшĕнчи кăлтăкĕсене те, харкам-типологи хăй евĕрлĕхĕсене те шута илмелле.

## 1.3. Программăпа йĕркеленĕ вĕренӳ ĕç-хĕлĕн аталантаруллă хаклавĕ

Организацин программăпа шайлашуллă йĕркеленĕ вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пахалăхне хаклани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл çак ĕç-хĕле аталантарма май парать.

Хаклавăн концептуаллă никĕсĕсене Раççей Фдерецийĕн вĕренӳ çинчен калакан законĕпе тата Стандартпа килĕшӳллĕн палăртаççĕ.

Пахалăх хаклавĕ, урăхла каласан Организаци йĕркелесе пыракан ĕç-хĕле Стандартпа Программа ыйтнине тивĕçтернине хаклани, чăн малтан Организаци вĕренӳ валли мĕнле условисем тунине хакланипе çыхăнать. Ку вăл – психологи тата педагогика, кадр, пурлăхпа техника енчен тивĕçтерес, финанс, информаципе меслетлĕх, ертсе пыру условийĕсем.

Программăра Организацисен вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пахалăхне ачасенчен кĕтекен результатсен хаклавĕ çинче никĕсленсе пĕтĕмлетме палăртман.

Программăра кăтартнă тĕллев ориентирĕсене:

– ятарлă хакламалла мар;

– вĕсем ачасен пĕтĕмĕшле тата тапхăрсен хушшинчи аталанăвĕн шайне палăртмалли ятарлă никĕс пулмаççĕ;

– вĕсем ачасен чăн çитĕнĕвĕсемпе танлаштармалли тĕслĕх пулмаççĕ.

Программăра ачасен аталану, вĕсен вĕренӳ çитĕнĕвĕсен динамикине тĕрĕслесе тăмалли майсен системине палăртнă. Вăл сăнав çинче никĕсленет. Унта çаксем кĕреççĕ:

– педагогика ĕçĕсен хаклавĕпе вĕсене малашне лайăхлатас тĕллевпе çыхăннă педагогика сăнавĕсем, педагогика диагностики;

– ачасен вĕренӳ ĕç-хĕлĕнчи çитĕнĕвĕсене кăтартакан пухмач (портфолио);

– ача аталанăвĕн картти;

– ачан пайрăм аталанăвĕн тĕрлĕ шкали.

Стандарт тата вĕренӳ ĕç-хĕлĕн хаклав программипе шайлашуллă Программа:

1) шкулчченхи ачан аталанăвĕн тата ăнăçлă социализацийĕн хаклавĕсене ырлать;

2) хальхи условисенче ачасен аталанăвĕн çул-йĕрĕ тĕрлĕрен пулма пултарнине шута илет;

3) шкулчченхи вĕренӳ системинче варитивлă вĕренӳ программисемпе тата тĕрлĕ йĕркелӳ формисемпе усă курма тĕллетерет;

4) çемьене, вĕренӳ организацийĕсене, педагогсене хаклав меслечĕсемпе инструменчĕсене çаксене шута илсе суйлама май парать:

– шкулчченхи ачалăхра ачан аталанăвĕ тĕрлĕрен пулма пултарнине;

– вĕренӳ уçлăхĕн варианчĕсем тĕрлĕ пулнине;

– Раççей Федерацийĕн тĕрлĕ регионти муниципаллă организацисен вырăнти условисем расна пулнине.

Вĕренӳ ĕç-хĕлĕн аталантаруллă хаклавĕн тĕп тĕллевĕ – шкулчченхи вĕренӳ системине Стандарт ыйтнипе, унăн принципĕсемпе шайлашуллă аталантарасси.

Программăра пахалăх хаклавĕн системин çак шайĕсене палăртнă:

- ачан аталăнăвĕн диагностики. Вăл педагога хăйĕн ĕçĕсен витĕмне хакламалли, малашнехи ĕç-хĕлне планмалли инструмент пулать;
- Организацин харкам тата шалаш хаклавĕ;
- Организацине тулаш хаклани. Вăл шутра никама пăхăнман профессилле тата обществăлла хаклав.

Вĕренӳ организацийĕн шайĕнче ĕç-хĕлĕн аталантаруллă хаклавĕн системи çак задачăсене татса парать:

- шкулчченхи вĕренӳ программине пурнăçлассин пахалăхне ӳстересси;
- Организацин тĕп вĕренӳ программи тытăмĕ, условисем тата тĕллев ориентирĕсем тĕлĕшĕнчен Стандарт ыйтнине тивĕçтерессси;
- Организацин ĕç-хĕлне объективлă тĕрĕслесе хак парасси;

- педагогсене, Организацин малашлăх аталанăвĕпе килĕшӳллĕ, професси ĕç-хĕлĕнчи ориентирĕсене кăтартасси;
- шкулчченхи тата пĕтĕмĕшле пуçламăш вĕренĕвĕн вĕçе-вĕçĕмлĕх никĕсне хывасси.

Шкулчченхи вĕренӳ пахалăхне ӳстерес ĕçре тĕп вĕренӳ программине пурнăça кĕртессин психологипе педагогика условийĕсен пахалăхĕсен хаклавĕ питех те пĕлтерĕшлĕ. Вĕренӳ пахалăхне Организаци шайĕнче хакланă чухне психологипе педагогика условийĕсен пĕлтерĕшĕ малта пулмалла. Хаклавăн тĕп объекчĕ – ача, унăн çемйи тата Организацин педагогика коллективĕ хутшăнакан вĕренӳ процессĕн шайĕ.

Пахалăх хаклав системи педагогсене те, администрацине те харкам ĕç-хĕлне сăнама тата программăпа тĕплĕ ĕçлеме майсем туса парать. Вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пахалăхне хакланин результачĕ кирлĕ чухне вĕренӳ тĕп программине улшăнусем кĕртнине, вĕренӳ ĕç-хĕлĕн условисене тĕрĕслениине сăлтавлама май парать.

Вĕренӳ ĕç-хĕлне пахалас ĕçре ачасен çемйисен, Организацин вĕренӳ ĕç-хĕлне хутшăнакан ытти субъекчĕсен шухăш-кăмăлне шута илни те пĕлтерĕшлĕ.

Пахалăх хаклав системи Организаци администрацине те, педагогсене те хăйсен ĕçне тишкерме, малашнехи ĕçне лайăхлатма май парать. Хаклав результачĕсем вĕренĕвĕн тĕп программине, вĕрену процесне тӳрлетӳсем кĕртмелли, вĕренӳ условисене улăштармалли никĕс пулса тăраççĕ. Вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пахалăхне хаклас системăра ачасен çемйисем те, вĕренӳ хутшăнăвĕн ытти субъекчĕсем те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Шкулчченхи вĕренĕвĕн пахалăх хаклав системи:

– Организацин ***вĕреневĕн тĕп программин*** Стандартра палăртнă ***пилĕк тĕп вĕренӳ уçлăхĕнче пурнăçлассин психологипе педагогика тата ытти условийĕсен хаклавĕ*** çинче никĕсленмелле;

– ***ача тата унăн çемйи мĕне вĕрентмелле тесе шутланине,*** шкулчченхи вĕренĕвĕн ĕç пахалăхĕ ***вĕсене тивĕçтерни-тивĕçтерменнине*** шута илет;

- *Организаци ĕçĕн пахалăхне хакланă чухне ачан харкам аталанăвĕн хаклавĕ çинче* тĕревленме *чарать;*

– шкулчченхи программăсене, ĕç формисемпе меслечĕсене пĕр евĕрлетессинчен хăтарать, *вĕсен* ***вариативлăхне ырлать;***

– ***хаклав шалашне Организаци педагогĕсем харкам ĕçне хаклани те,*** шкулчченхи Организацири вĕренӳ ĕçĕн условисене ***профессилле тата никама пăхăнман обществăлла хаклани те кĕрет;***

– харкам хаклавара та, тулаш хаклавра та ***программăна епле пурнăçланине хакламалли инструментсем*** пĕр пулмалла.

# 2. ПРОГРАММА ШАЛАШĔ

## 2.1. Пĕтĕмĕшле калани

Программа ку пайĕнче çакна çырса кăтартнă:

– вĕренӳ ĕç-хĕлĕн модулĕсене ачан аталанăвне пилĕк вĕренӳ услăхĕпе килĕшуллĕн сăнланă: социаллă хутшăну, ăс-тăн, пуплев, ӳнерпе илемлĕх, ӳт-пӳ аталанăвĕ;

– Программăна пурнăçа кĕртмелли вариативлă формăсемпе меслетсене, хатĕрсене, ачасен харкам психологийĕн уйрăмлăхĕсене, вĕсен вĕренӳ туртăмĕн спецификине, интересĕсене;

– сывлăх тĕлĕшĕнчен кăлтăк пур ачасемпе ĕçлемелли адаптивлă тӳрлетӳ-аталантару программине.

Вĕренӳ ĕç-хĕлне йĕркелемелли майсене педагогика коллективĕ вырăнти условисене мĕнле пăхнине шута илсе, Стандартпа тата Организацин программипе килĕшӳллĕ суйлама ирĕк панă.

Вĕренӳ процесне, аталану енĕсемпе вĕренӳ ĕç-хĕлне вĕренӳ услăхĕсенче палăртнă пек йĕркеленĕ май программа принципĕсене тытса пымалла, вăл шутра ачалăх тĕрлĕлĕхне, ачан харкам тата ӳсĕм уйрăмлăхĕсене шута илмелле. Вĕренӳ шалашне çав принципсем çинче йĕркеленĕ май ачан интересĕсемпе вĕренӳ сăлтавĕсем, вĕсем хăйсем те пĕр-пĕринчен самай улшăнса тăнине; пултарулăхĕсем тĕрлĕрен пулнине, вĕсен тĕрлĕ социокультурăллă услăх пулнине, организаци ăçта вырнаçнине асра тытмалла.

## 2.2. Вĕренӳ ĕç-хĕлне ача аталанăвĕ тата вĕренӳ услăхĕсемпе килĕшӳллĕн уçса пани

Программăна пурнăçламалли вариативлă формăсемпе мелсене, меслетсене тата хатĕрсене ачасен ӳсĕм тата харкам уйрăмлăхĕсене, вĕренӳ туртăмĕсене, интересĕсен спецификине шута илсе çырса пани.

Программăна пурнăçласси вĕренӳ программисенче, меслетлĕх пособийĕсенче çырса кăтартнă вариативлă формăсемпе мелсем, меслетсемпе хатĕрсем çинче никĕсленсе пулса пырать. Вĕсем Программа принципĕсемпе, тĕллевĕсемпе килĕшсе тăраççĕ. Педагог вĕсене Программăна вăйа кĕртессин социокультура, географи, климат условийĕсем тĕрлĕрен пулнине, ачасен

ӳсĕм уйрăмлăхĕсемпе интересĕсене, ушкăн мĕнле йĕркеленнине, ашшĕ-амăшĕсем (саккунлă представителĕсем) ыйтнине шута илсе суйлаççĕ.

Вĕренӳ ĕç-хĕлĕн вариативлă формисем, мелĕсем, меслечĕсем шутĕнче çаксене палăртма пулать: пĕтĕм ушкăн валли йĕркеленĕ занятисем; тĕрлĕ тĕслĕ вăйă, вăл шутра ирĕклĕ вăйă, вăйă-тĕпчев, роллĕ вăйăсем, хусканулла тата халăх вăййисем; ачасем аслисемпе тата тантăшĕсемпе хутшăнни; тĕрлĕ проект, вăл шутра тĕпчев проекчĕсем; уявсем, социаллă акцисем, çавăн пекех режим саманчĕсем. Вĕсемпе пуринпе пĕрлĕхлĕ е кашнипе уйрăммăн аслисем пуçарнипе йĕркеленĕ тĕрлĕ ĕç-хĕлте те, ачасем хăйсем суйланă ĕç-хĕлте те усă курма пулать.

Кашни формăпа, мелпе, меслетпе тата хатĕрпе Стандартăн тĕп принципĕсем тата 1.1.2 пайĕнче уçса панă принципĕсем çинче никĕсленсе усă курмалла. Урăхла каласан, ачана вĕренӳ процесĕнче хăйĕн пултарулăхĕпе тата интересĕсемпе шайлашуллă, активлă хутшăнма майсем туса памалла. Вĕсен хутшăнăвĕ кашнинех тивĕçлĕ аталантарма май памалла.

Программăна пурнăçлама, Стандартра тĕллевлĕ ориентирсем пек çырса кăтартнă Программăн 1.2 пайĕнче тăратнă кĕтекен результатсене калăплама тивĕçлĕ формăсем, мелсем, меслетсем суйласа илнĕ чухне ачасен ӳсĕм характеристикисене, кашни ӳсĕм тапхăрĕнче лартакан ӳсĕм задачисене шута илмелле.

### 2.2.1. Чи пĕчĕккисен тата кĕçĕннисен ӳсĕмĕ

Чи пĕккисен тата кĕçĕннисен ӳсĕм тапхăрĕн тĕп задачи – харкама, çынсене, тĕнчене шанас туйăма калăпласа пырасси.

Çитĕннисен пĕлтерĕшлĕ задачи – шанчăклă, хаваслă хутшăну йĕркелесе тытса пырасси. Çакăн çинче ачан психика тата харкам аталанăвĕ никĕсленет (Б. Боулби, Э. Эриксон, М.И. Лисина, Д.Б. Эльконин, О.А. Карабанова тата ыт те.). Ку процесра тĕпре ачан аслисемпе туйăмлă хутшăнни пулать.

Ача ӳснĕçемĕн унпа çывăх çитĕннисен шучĕ нумайланса пырать. Вĕсемпе хутшăннă май ача хăрушсăрлăх тата юрату тупать. Тантăшĕсем ăна тĕнчене тĕпчеме, çĕнни уçса пыма хавхалантараççĕ.

Программăна пурнăçа кĕртнĕ май ачасемпе шанчăклă, хавхаланулла хутшăну тытса пыни пур ӳсĕмре те пĕлтерĕшлĕ.

Харкам аталанулла хутшăнура педагог кашни ачан ӳсĕм тата харкам уйрăмлăхĕсене, характерне, йăлисемпе туртăмĕсене шута илет. Кун пек хутшăнура вăл чи малтан ачан харкамлăхне, унăн уйрăмлăхĕсемпе туртăмĕсене, ĕç сăлтавĕсене тимлет, ача хăйне хăтлă туйтăр, пултарулăхĕсем ăнăçлă аталанччăр, вĕсене пурнăçа кĕртме майсем анлăланччăр тесе тăрăшать.

Çакă пурнăçлантăр тесен Оганизацинче те хăтлă та кăмăллă лару-тăру пулмалла, çитĕннисемпе ачасен пĕр-пĕрне шанмалла, кашни ача хăйне хăтлă туймалла, хăйĕн кăмăл-туйăмне ирĕклĕ палăртма, кăмăл туртăмĕсене тивĕçтерме пултармалла. Çакăн пек хутшăну унăн кăмăл-туйăм, мотиваци, пĕлӳлĕх уçлăлăхĕсене, харкамне пĕтĕмĕшле аталантармалли тĕп услови пулать.

Çак ӳсĕмшĕн ачан шырав-тĕпчев активлăхне аталантарма майсем туса пани уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

**Чи пĕчĕккисен ӳсĕмĕ (2–12 уйăх)**

Пĕрремĕш çур çулта вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем çак условисене йĕркелессипе çыхăннă:

– ачан шанăç кăмăл-туртăмне унăн малашнехи (пурнăç тăршшĕпех) психика тата харкам аталанăвĕн тĕп условийĕ пек аталантарса пыни;

– харкама, çынсене, тĕнчене шанас тĕп туйăма аталантарни;

– пĕчĕк ачапа çитĕннисен туйăмлă (уйрăм лару-тăрура, харкам хутшăнура ) хутшăнăвне аталантарни;

– япала таврашне пĕлес активлăха, тĕпчев активлăхне аталантарни;

– ӳт-пĕве пиçĕхтерни.

Ку ӳсĕм тапхăрĕнче ача туйăмлă хутшăннă май унăн малашнехи аталану мехелĕ никĕсленет. Çак харкам характеристикăсем калапланассин никĕсĕ йĕркеленет: харкама хăтлă туйни, пуçарулăх, пĕлес туйăм, таврари çынсемпе кăмăллăн хутшăнни, вĕсене шанни.

*Социаллă хутшăну аталанăвĕн уçлăхĕнче*

Асли ачан ыттисемпе хутшăнас тата социаллă çыхăну туртăмне тивĕçтерет: ачана ăшă кулăпа пăхать, çепĕç сăмахсем калать; тирпейлĕн, сыхланулла алă çине илет, ачашлать; вăл кулнине, пуплешнине хуравлать; ача пуçарăвне хавхалантарать. Ачана хăйне хăтлă туйма майсем туса парать, ăна ятран чĕнет, мухтать. Ача кăмăлсăррине шута илет, сăлтавне сирет (пиелет, тăхăнтарать, çитерет тата ыт. те), лăпланатарать.

Асли ачан пуплешĕвне аталанма пулăшать: режим саманчĕсене пурнăçланă май унпа калаçать; ачан хусканăвĕсене сăмахпа каласа пырать; япаласен, теттесен ячĕсене калать; туйăмлă вăйăсем йĕркелет; юрăсем юрлать.

*Пĕлӳлĕх уçлăхĕнче*

Асли ачана çĕнĕ кăмăл-туйăмсемпе пуянланма условисем туса парать. Унăн пĕлес килнине амалантарать. Вăл курма-илтме пултаракан уçлăха теттесем, тĕрлĕ капăшлă, калăпăшлă, тĕрлĕ фактурллă тата тĕрлĕрен янракан,

тĕрлĕ тĕслĕ япаласем хурать. Ача виçĕ уйăх тултарсан аллине тетте тыттарать, ачана алă çинче çĕклесе çӳрет, таврари япаласене кăтартса вĕсен ятне калать.

*Ӳт-пӳ аталанăвĕн уçлăхĕнче*

Асли ачана ӳсме, сывлăхне çирĕплетме, мышцисен тонусне, хусканăвĕсене аталантарма майсем туса парать. Апатланăвне, тĕрĕс режимне, уçăлса çӳрессине йĕркелет, гимнастика тутарать, массаж тăвать.

Иккĕмĕш çур çулта тĕп задачăсен шутĕнче çак условисене тăвасси пулать:

– ачан пĕлӳлĕх, япаласене тытас, вĕсемпе аппаланас активлăхне аталантарни;

– çитĕннисемпе ĕçлĕ лару-тăрусенче хутшăнни;

– пуплевне аталантарни;

– ачана ӳнер тата илемлĕх ĕç-хĕлне явăçтарни;

– ачан харкама пăхас малтанхи хăнăхăвĕсене аталантарни;

– ӳт-пĕвне пиçĕхтерни.

*Социаллă хутшăну аталанăвĕн уçлăхĕнче*

Асли ачан хутшăнас тата социаллă çыхăнура пулас туртăмне тивĕçтерет: тĕрлĕ япалапа усă курса ачапа вылять, вăйăра аслипе ача хăтланăшĕсемпе активлăхĕ черетленсе пымалла. Çитĕнни япаласемпе мĕн тумалли тĕслĕхне кăтартать, ачана хăй тĕллĕн вăйă-тĕпчев йĕркелеме япала-аталану хутлăхне йĕркелет. Ачан хутшăнас тата япаласене тытса аппаланас пуçарулăхне хавхалантарать.

*Обществăри хутшăну аталанăвĕн уçлăхĕнче*

Педагог ачан хăйне хăтлă туяс, хăйне хăй кăмăллă йышăнас туйăмне аталантарма майсем туса парать: ачана тĕкĕр умне йăтса пырать, хăйĕн сăн-сăпатне, тумтирне тимлеттерет; ачана хăйĕн ăнаçăвĕсене тимлеттерет, мухтаса хăй уншăн савăннине палăртать.

Асли ачан ыттисемпе интересленес, вĕсене кăмăллă йышăнас мехелне аталантарма майсем туса парать. Пĕр-пĕринпе хутшăнма хăрушсăрлăх талккăшĕ йĕркелет. Ăна тĕрлĕ япалапа пуянлатать. Ачасен çак уçлăхри активлăхне, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле интересленнине, çыхăнса хутшăннине сăнать, ачасене ятран чĕнет. Пулса иртекен ĕçсене сасăласа пырать.

Ку ӳсĕм шайĕнчи ача хальлĕхе тепĕр ача интересĕсене ăнланаймасть, хăйĕн теттисемпе пайланаймасть, ыттисен теттисене илмелле маррине ăнланаймасть. Ку ӳсĕм тапхăрĕнче ачаран çак хăнăхусене ыйтмаççĕ. Аслин тĕллевĕ – хирĕçекен ачасен тимлĕхне ытти интереслĕрех объектсем тата ĕçсем çине куçарса пулма пултарас хирĕçӳлĕхсене сиресси.

Асли ҫаврӑн пекех ачан харкам хӑйне пӑхас туртӑмне тытса пырать, хӑй тӗллӗнлӗхне аталантарать: ачана хӑй тӗллӗн кашӑк тытнишӗн, турилккерен апат ҫинӗшӗн, чей чашкинчен ӗҫме хӑтланнишӗн мухтать.

*Пӗлӳлӗх уҫлӑхӗнче*

Асли ачан пӗлес туйӑмне аталантармалли майсем туса парать. Ачана тавралӑха тишкерме, тӗпчеме, тӗрлӗ эксперимент тума май пур (пайсем ҫине салатма, детальсене уйӑрма-пуҫтарма, купалама, тӗрлӗ сасӑ кӑларма) япаласемпе пуянлатать. Вӗсем тӗрлӗ калӑпӑшлӑ, капашлӑ пулма пултараҫҫӗ. Япаласен ҫийӗ, тӗсӗ тӗрлӗ пулма пултарать (йывӑҫ, пластмасс, хут, пир, губка, ҫӑм, вӗрен тата ыт. те). Ҫак япаласем ачана вӗсен тӗрлӗ пахалӑхӗпе паллашма, унӑн асне аталантрма май параҫҫӗ. Сасӑ кӑларакан теттесемпе япаласем (шакӑртма, шӑнкӑрав тата ыт. те) ачана сӑлтав тата мӗн хыҫҫӑн мӗн пынин (следстви) ҫыхӑнӑвӗсене курма вӗрентсе пыраҫҫӗ.

Куллен уҫӑлса ҫӳренӗ чухне асли ача мӗнпе интересленнине, ҫут ҫанталӑк объекчӗсемпе еплерех кӑсӑкланнине сӑнать. Хӑй те ачапа хавхаланса интересленнине, тӗлӗннине кӑтартать. Ача тимлекен япаласен ячӗсене каласа хӑй те унпа пӗрле кӑсӑкланнине, тӗлӗннине палӑртать. Ачапа пӗрле чул таткисене, ҫулҫӑсене, чечексене тата ыт. те сӑнать.

*Пуплев аталанӑвӗн уҫлӑхӗнче*

Ачапа ҫыхӑннӑ-хутшӑннӑ май асли ӑна хӑйӗн кӑмӑлне, шухӑш-туйӑмне, интересӗсене палӑртма – ҫавна май ӑна калаҫса кайма хавхалантарать. Вӑл пепке мӗн тӑвасшӑн пулнине ӑнланма тӑрӑшать. Ача мӗн каласшӑн тата мӗн ыйтасшӑн пулнине хусканусемпе кӑтарать. Хутшӑнура тата вӑйӑра асли ачана пуплеве ӑнланма хистет. Ҫитӗнни хӑйӗн тата ачан ӗҫӗсене, хусканӑвӗсене сӑмахпа сӑнлать, таврари япаласен ячӗсене калать, ача-пӑча сӑввисене вулать, юрӑсем юрлать, ӳкерчӗксем кӑтартать, унта мӗн ӳкернине каласа парать. Сӑвӑ-юрӑллӑ, хускануллӑ вӑйӑсем йӗркелет.

*Ӳнерпе илемлӗх аталанӑвӗн уҫлӑхӗнче*

Педагог япалапа талккӑш хутлӑхӗ йӗркеленӗ май ӑна кирлӗ хатӗрсемпе, япалсемпе тата материалсемпе тултарать: музыка инсруменчӗсемпе, картинӑсен репродукцийӗсемпе, хутпа, пурӑсемпе, кӑранташсемпе, сӑрӑсемпе тата ыт. те.

Асли ачасене музыка хайлавӗсен фрагменчӗсене итлеттерет. Ача-пӑча музыка инструменчӗсем мӗнле янранине кӑтартать. Ачасене кӗвӗ майӑн хускалма тата ташлама хавхалантарать. Вӗсемпе пӗрле картинӑсем сӑнать, пуканесемпе, пӳрне теттесемпе кӗске инсценировкӑсем кӑтартать. Ачасем валли вӗсен умӗнче ӳкерсе хӑйсене те ӳнер ӗҫ-хӗлне хутшӑнма хистет.

Ачасене пур материалпа та хăйсен туйăмĕсене палăртма, япаласемпе экспериментсем тума майсем туса парать: инструментсемпе тĕрлĕ сасă кăлярма, пурăсемпе тата кăранташсемпе çырма, сăрăсемпе сăрлама аппалантарать.

*Ӳт-пӳ аталанăвĕн уçлăхĕнче*

Асли ачан пĕтĕм хускану аталăнăвĕ валли майсем туса парать, пахалăхлă апатлану йĕркелет, кун йĕркине тытса пырать (вăхăтра çывăрттарни, куллен уçă сывлăшра пулни), хушăран-хушă массаж тăвать.

Ку тапхăрата уйрăмах ачасен шултра тата вĕтĕ моторикине аталантарассине тимлемелле.

*Шултра моторика уçлăхĕнче*

Ачан ирĕклĕ хускану активлăхне, пӳлĕмре хăй тĕллĕн куçас мехелне, пĕрремĕш утăмсем тăвас ăнтăлăвне аталантарма май паракан хăрушсăрлăх япала талккăш уçлăхне йĕркелет.

Ачан хускану аппаратне тата унăн талккăш координацине аталантарас тесен, ăна талккăшра хăй тĕллĕн куçма, тӳрĕ тăма вĕрентни пĕлтерĕшлĕ. Ачан тĕп шултра хусканăвĕсене харкам траекторипе аталантарма майсем туса памалла. Ачасенчен ытларахăшĕ хаваслансах (активлă) упаленеççĕ. Анчах хăш-пĕрисем çак тапхăра сиктерсе урăхла та аталанаççĕ.

Харкам тĕллĕн тăрас хăнăху та тĕрлĕ ачан тĕрлĕ ӳсĕмре (10 уйăхран пуçласа çулталăк çурăччен е тата ытларах та) калăпланать. Çине тăрсах ачана васкатма хăтланни, тулăксăр хистени ăна сиен кӳме пултарать.

*Вĕтĕ моторика уçлăхĕнче.*

Педагог ача талккăшне тĕрлĕ материалтан тунă (йывăç, пластмасс, пир, çăм тата ыт. те), тĕрлĕ капашлă тата калăпăшлă япаласемпе пуянлатать. Вĕсене тытса пăхнă, хыпашланă май ачан вĕтĕ моторики аталанать. Кăранташсемпе пурăсемпе аппаланни те ачан вĕтĕ моторикине аталантарма пулăшать.

**Кĕçĕннисен ӳсĕмĕ (1–3 çул)**

**Социаллă хутшăну аталанăвĕ**

Социаллă хутшăну аталанăвĕн уçлăхĕнче вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем çак условисене йĕркелессипе çыхăннă:

– ачапа аслисен хутшăнăвне малалла аталантарни,

– ачапа ытти ачасен хутшăнăвне малалла аталантарни,

– ачан вăййине малалла аталанатарни,

– ачан харкама пăхас хăнăхăвĕсене малалла аталантарни.

Педагог ачана активлă калаçма хавхалантарса унăн хутшăну тата социаллă çыхăну туртăмне тивĕçтерет. Вăл ачан пуплев аталанăвне искусствăлла васкатма ăнтăлмасть, унпа тĕрлĕ япалапа усă курса вылять, Вылянă май асли хăйĕн активлă хусканăвĕсене ачаннипе черетлесе пырать, япаласемпе мĕн тумаллин тĕслĕхĕсене кăтартать. Харкам тĕллĕн вылямалтĕпчеме май паракан япала аталантару талккăшне йĕркеленине асра тытса педагог ачан хутшăнури тата япаласемпе аппаланас пуçарăвне ырлать, хавхалантарса пырать.

Асли ачан хăйне хătлă туяс, хăйне кăмăллă йышăнас туйăмне аталантарма майсем туса парать: ăна тĕкĕр патне йăтса пырать, хăйĕн сăнсăпатне, тумтирне тимлеттерет, пепкене хăйĕн ăнăçăвĕсене асăрхама пулăшать, унăн пуçарулăхне, вăл тĕрлĕ ĕçре çине тăнине ырласа тăрать.

Педагог ачан ыттисемпе интересленес, вĕсене кăмăллă йышăнас кăмăлтуйăмне аталантармалли майсем туса парать: ачасене пĕр-пĕринпе çыхăнса хутшăнма хăрушсăрлăх уçлăхĕ йĕркелет, ăна тĕрлĕ япалапа пуянлатать, ачасем çак уçлăхра мĕн таран активлă пулнине сăнать, вĕсем пĕр-пĕринпе интересленнине, хăйсене ăшпиллĕн тытнине ырлать, вĕсене ятран чĕнет, таврара мĕн пулса иртнине сасăласа пырать. Çак ӳсĕмре ачасем хутшăнура кăтартакан тĕрлĕ туйăмне (савăнăç, тарăху, пăшăрхану тата ыт. те) сасăласа палăртни пĕлтерĕшлĕ.

Педагог ачан кулленхи тĕрлĕ лару-тăрура хутшăнас тата харкама пăхас хăнăхăвĕсене харпăрлас хăйтĕллĕнлĕхне малалла тытса пырать.

*Социаллă хутшăну тата тантăшсен хутшăнăвĕн аталанăвĕнче*

Педагог ачасен тĕрлĕ вăйăра тата кулленхи лару-тăрура ирĕклĕн йĕркелекен хутшăнăвне сăнать, хирĕçӳсем тухсан тӳрех хутшăнма васкамасть; ачасен социаллă çыхăнăвĕсенче палăракан туйăмĕсене тимлет; кӳрентерсен ачасене лăплантарать, вĕсене хăйсен хăш хăтланăшĕсем ыттисене кӳрентерме пултарнине ăнлантарать.

Асли ачасенче хаваслă кăмăл-туйăм вăратакан лару-тăру йĕркелет, мĕнле лару-тăру тата мĕнле хăтланăшсем çĕкленӳллĕ туйăм (савăнăç, тав туйăмĕ, кăмăл тулни тата ыт. те) çуратма пултарнине ăнлантарать. Çапла майпа ачасем хăйсен тата таврари çынсен хăтланăшĕсем ыттисен кăмăлтуйăмне мĕнле витĕм кӳнине ăнланма вĕренеççĕ.

*Вăйă аталăнăвĕнче*

Педагог тивĕçлĕ вăйă уçлăхĕ йĕркелет. Кирлĕ чухне вăл ачасене тĕрлĕ вăйă сюжечĕсемпе паллаштарать, ансат вăйă ĕçĕсене (пуканесене тăрантарни, кастрюльте апат пăтратни, ытти тĕрлĕ вăйă ĕçĕсене) кăтартать. Улăштару япалсемпе усă курса вĕсене ансат вăйă ĕçĕсене харпăрлама пулăшать. Ачана

вӑйӑсенче тӗрлӗ роль (амӑшӗ, хӗрӗ-ывӑлӗ, врач тата ыт. те) выляма хавхалантарать. Темиçе ачапа ансат сюжетлӑ вӑйӑсем йӗркелет.

*Социаллӑ тата туйӑмлӑ аталанура.*

Педагог ачана Организацире хӑнӑхма пулӑшать. Ку ӗçе, ачасем хӑйсен çывӑх çыннисемпе тачӑ çыхӑнинне шута илсе, ашшӗ-амӑшне е тӑванӗсене явӑçтарать. Вӑл ачапа чи малтан ашшӗ-амӑшӗ е çывӑх çыннисем умӗнче паллашать, унпа ырӑ хутшӑну пуçарса ярать. Хӑнӑху тапхӑрӗнче педагог ача хӑйне мӗнле туйнине сӑнасах тӑрать, ашшӗ-амӑшӗсемпе куллен çыхӑну тытать. Ачана майӗпен, васкатмасӑр хӑй еккипе Организаци режимне тата талккӑшне хӑнӑхма май парать.

Ача ыттисемпе паллашать. Педагог ӑна кирлӗ чухне пулӑшать, тантӑшӗн ятне калать, малтанхи вӑхӑтра хӑйпе юнашар лартать. Çавӑн пекех, кирлӗ пулсассӑн педагог ачана Организацин талккӑшӗпе, унти материалсемпе паллаштарать, ӑна хӑй валли ӗç тупма пулӑшать. Педагог ачасен харкама пӑхас хӑйтӗллӗнлӗх туртӑмне тытса тӑрать (тумланма, çӑвӑнма ирӗк парать, пулӑшать), кулленхи ӗç-хӗле пурнăçлама хавхалантарать, хутшӑну этикет правилисемпе паллаштарать, тирпейлӗхе вӗрентет.

## Пӗлӳлӗх аталанӑвӗ

Пӗлӳлӗх аталанӑвӗн уçлӑхӗнче **вӗренӳ ӗç-хӗлӗн тӗп задачисем** çак условисене йӗркелессипе çыхӑннӑ:

– ачасене таврари тата тӗнчери пулӑмсемпе, япаласемпе паллаштарни, вӗсемпе усӑ курма вӗрентни;

– пӗлӳ тӗпчев активлӑхне, пӗлӳлӗх пултарулӑхне аталантарни.

*Таврари çут çанталӑкпа паллаштарас ӗçре*

Педагог ачасене ушкӑнпа уçӑлса çӳренӗ чухне, вӑйӑсемпе занятисенче, таврари япалсемпе, пулӑмсемпе, вӗсен пахалӑхӗсемпе паллаштарать, мӗн тума кирлине ӑнлантарать; тетте ӗç хатӗрӗсемпе (савук, кӗреçе тата ыт. те) ӗçлеме вӗренме пулӑшать.

*Пӗлӳ-тӗпчев активлӑхне, ӑс-тӑн пултарулӑхне аталантарас ӗçре*

Педагог ачасен ытларах пӗлес кӑмӑлне амалантарать, вӗсене тӗпчев ӗç-хӗлне хутшӑнма хавхалантарать. Ку тӗллевпе пуян япала-аталану уçлӑхне йӗркелет, ӑна тивӗçлӗ япаласемпе тултарать. Кун валли кил-тӗрӗшри япаласемпе усӑ курма пулать: касрюльсем, куркасем, кӗленчесем, карçинккасем, мӑйӑрсем, йӗкелсем, хӑйӑр, шыв тата ыт. те. Асли ачасем таврари çут çанталӑкпа мӗнлерех интересленнине тимлӗ сӑнать. Вӗсен ыйтӑвӗсене тимлет. Хатӗр хуравсем пама васкамасть, ачасемпе пӗрле тӗлӗнет, савӑнать.

**Пуплев аталанăвĕ**

Пуплеве аталантарас ĕçре ***вĕренĕвĕн тĕп задачисем*** шутĕнче çак условисене йĕркелесси пулать:

– кулленхи пурнăçра ачасен пуплевне аталантарни;

– ятарласа йĕркеленĕ занятисемпе вăйăсенче ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕн аталантарни.

*Кулленхи пурнăçра ачасен пуплевне аталантарас ĕçре*

Педагог ачасем хăйсене мĕнле туйнине, вĕсен кăмăл-туйăмĕсемпе интересĕсене, ыйтăвĕсене тимлет. Ачасене чăтăмлăн итлет, мĕн каласшăн пулнине ăнланма тăрăшать. Çавна май ачан пуплев активлăхне тытса пырать, Асли ачан йăнăшĕсене ятарласа кăтармасть, анчах вăхăтра тӳрлетсе тĕрĕссине калать. Педагог тĕрлĕ лару-тăрăва ачасемпе диалог йĕркелеме усă курать, вĕсене пĕр-пĕринпе хутшăнма условисем туса парать. Вăл ачасене хавхаланса пуплеме хистекен ыйтусем парать. Кулленхи пурнăçри лару-тăру пулăмĕсене ăнлантарать. Ачапа унăн кулленхи пурнăçĕнчи кăсăклă самантсемпе пулăмсем, опычĕпе интересĕсем çинчен калаçать. Ачасене пĕр-пĕринпе хутшăнма, хăйсен кăмăлне палăртма, мĕн те пулин каласа пама хистет.

*Пуплеве тĕрлĕ енлĕн аталантарас ĕçре*

Аслисем ачасене кĕнекесем вуласа параççĕ. Унта мĕн ӳкернине ăнлантараççĕ, сăвăсем пăхмасăр калама хавхалантараççĕ, пуплев вăййисем йĕркелеççĕ, сăмах ăславлăхне амалантараççĕ. Ачасен словарьне пуянлатас, вĕсен грамматика тата сасă хăнăхăвĕсене аталантарас, пуплевĕн планлас тата йĕркелес функцийĕсене аталантарас тĕлллевпе ятарлă вăйăсемпе занятисем йĕркелеççĕ.

**Ӳнерпе илемлĕх уçлăхĕ**

Ӳнерпе илемлĕх аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– ачасен тавралăх илемне курас мехелне аталантарни;

– ачасене ӳнер ĕç-хĕлĕсене явăçтарни;

– ачасене кĕвĕ культурине явăçтарни;

– ачасене театрализаци ĕç-хĕлне явăçтарни

*Ачасен тавралăх илемне курас мехелне аталантарас ĕçре*

Педагогсем ачасене хитре япаласене, çут çанталăк, ӳнер хайлавĕсен илемне тимлеттереççĕ; курни-илтнишĕн хумханас, хĕпĕртес-хурланас туйăмсене амалантараççĕ, хăйсене те харкам туйăмĕсене палăртма хавхалантараççĕ.

*Ӳнер ĕç-хĕлĕсене явăçтарас ĕçре*

Аслисем тĕрлĕ материалпа – сăрăсемпе, кăранташсемпе, пурăсемпе, пластилинсемпе, тăмпа – экспериментсем ирттерме анлă майсем туса параççĕ; ӳнер ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ ансат мелĕпе паллаштараççĕ; ачасен ăславлăхне, шухăш вĕçевне ырлаççĕ.

*Кĕвĕ культурине явăçтарас ĕçре*

Педагог Организацири ушкăн пӳлĕмĕсенче кĕвĕ уçлăхне йĕркелет, кĕвĕ ӳнерне кулленхи пурнăçа кĕртет. Ачасене музыка хайлавĕсен сыпăкĕсене, тĕрлĕ музыка инструменчĕсен янравне итлеме, инструментсемпе тата янракан япаласемпе экспериментсем тума майсем туса парать.

Çитĕннисем ачасемпе пĕрле юрăсем юрлаççĕ, вĕсене кĕвĕ майĕн хускалма хавхалантараççĕ, кĕвĕ-çемĕ ача чунне хускаттăр тесе тăрăшаççĕ.

*Театрализаци ĕç-хĕлне явăçтарас ĕçре*

Аслисем тĕрлĕ вăйăра ачасене театрализаци мелĕсемпе паллаштараççĕ. Ачасене унччен илтнĕ юмахсене, сăвăсене выляса кăтартаççĕ, театр постановкисене пăхма майсем туса параççĕ. Пĕчĕккисене хăйсене те мехел çитнĕ таран инсценировкăсене явăçтарма тăрăшаççĕ, хăйсем курнă инсценировкăсем çинчен калаçтараççĕ.

**Ӳт-пӳ аталанăвĕ**

Ӳт-пӳ аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** шутĕнче çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннисем те пур:

– ачасен сывлăхне çирĕплетесси, сывă пурнăç йĕркин пахалăхĕсене харпăрлама пулăшасси;

– хускану активлăхĕн тĕрлĕ тĕсне аталантарасси;

– хăрушсăрлăх тыткаларăш хăнăхăвĕсене калăпласси.

*Ачасен сывлăхне çирĕплетес, сывă пурнăç йĕркин пахалăхĕсене харпăрлама пулăшас ĕçре*

Педагогсем тĕрĕс режим йĕркелеççĕ, ачасене харкам тасалăх правилисене тытса пыма хăнăхтараççĕ, сывлăхшăн мĕн усăллă, мĕн сиенлĕ пулнине ансаттăн ăнлантараççĕ.

*Хускану активлăхĕн тĕрлĕ тĕсне аталантарас ĕçре*

Аслисем Организаци çурчĕн пӳлĕмĕсенче те, тулаш территорийĕнче те талккăш уçлăхне ачасен хускану туртăмĕсене тивĕçтерме, вĕсен координацине, вăр-варлăхне, вăйне аталантарма май паракан тивĕçлĕ хатĕрсемпе усă курса йĕркелеççĕ;

Ачасен хускану активлăхне тивĕçтерекен, вĕсен вăр-варлăхне, хускану координацине, ӳт-пĕвне тĕрĕс тытассине аталантаракан, хаваслантарма май паракан шавлă вăйăсем иртереççĕ.

Ачасене вĕтĕ моторикăна аталантарма пулăшакан япаласемпе выляма явăçтараççĕ.

*Хăрушсăрлăх хăнăхăвĕсене калăплас ĕçре*

Аслисем Организацире хăрушсăрлăх ушкăнне йĕркелеççĕ, ачасене хăйсен пурнăçне тата сывлăхне сиен кӳме пултаракан хăтланăшсене асăрхаттараççĕ. Анчах та хăрушсăрлăх ыйтнине тивĕçтерни ачасен активлăхне путармалла мар. Вĕсене таврари тĕнчене хавхаланса тĕпчеме чăрмантармалла мар.

## 2.2.2. Шкул умĕнхи ӳсĕм

**Социаллă хутшăну аталанăвĕ**

Социаллă хутшăну аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– хăйне тата ыттисене ăшпиллĕн йышăнассине аталантарни;

– ачасен социаллă тата хутшăну, вăл шутра информаци-социаллă ăслай-хăнăхăвĕсене аталантарни;

– вăйă ĕç-хĕлне аталантарни.

*Хăйне тата ыттисене ăшпиллĕн йышăнассине аталантарас ĕçре*

Çитĕннисем ачара унăн хăйне хăтлă туяс, хăйĕн мехелне, хăй маттур пулнине, ыттисем ăна юратнине ĕненес кăмăл-туйăмне калăплаççĕ. Ачара харкам тăнăçлăх туйăмне аталантараççĕ. Ачана хăйĕн чăнлăхсемпе ирĕксем, яваплăхсем (хăйĕн курăмĕ пулни; выляма-хутшăнма юлташсене, теттесене, ĕç-хĕлĕсене суйлама пултарни; унăн хăйĕн япалисем пулни) пулнине ăнланма пулăшаççĕ.

Çитĕннисем ачана таврари çынсене ăшпиллĕн йышăнма вĕренме майсем туса параççĕ. Ытти ачасемпе тата çитĕннисемпе вĕсен хăш наци çынни пулнине, мĕнле чĕлхепе калаçнине, мĕнле тĕне ĕненнине, мĕнле ӳсĕмре пулнине, ар уйрăмлăхĕсене пăхмасăр çураçуллă хутшăнма вĕрентеççĕ. Ытти çынсен харкам тăнăçлăхĕ, вĕсен шухăш-кăмăлне, туйăмне, курăмĕсене хисеплеме вĕрентеççĕ.

*Социаллă тата хутшăну, вăл шутра информаци-социаллă ăслай-хăнăхусене аталантарас ĕçре*

Ачасен мĕн пĕчĕкрен ыттисемпе хутшăнас туйăм пысăк. Пĕрремĕш социаллă опыт ачасем çемьере, кулленхи пурнăçра, тĕрлĕ çемье пулăмĕсене хутшăнса харпăрлаççĕ. Çемьен пурнăç йĕрки, пахалăхĕсем ачан социаллă хутшăну аталанăвĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ.

Çитĕннисем Организацире ачасене ыттисемпе пĕрле хутшăнса ĕçленин ырлăхне ăнланма харкам аталантару хутшăнăвĕ йĕркелесе, вĕсене тĕрлĕ

пулăмра хутшăнтарса, пĕрлĕлĕхлĕ ĕç планласа-йĕркелесе анлă майсем туса параççĕ. Çакă ачасен харкам яваплăх туйăмне, ытти çынсемшĕн тата пĕрлĕхлĕ ĕçшĕн яваплăх туйăмне, пĕрлĕхлĕ ĕç-хĕле ĕçтешсемпе калаçса-татăлса, вĕсен шухăшĕпе ĕçĕсене шута илсе йĕркелемеллине ăнланма пулăшать.

Çитĕннисем ачасене ыттисен кăмăл-туйăмне, пăшăрханăвĕсене курма-туйма, харкам пăшăрханăвĕсене палăртма вĕренсе пыма пулăшаççĕ.

Ачасемпе пурнăçри, калав-юмахсенчи тĕрлĕ лару-тăрăва, унта çăткăнлăх, тӳркăмăллăх, суялăх, усаллăх, ырăллăх мĕнле палăрнине сӳтсе явса *ырри* тата *усалли* ăнлавсене уçăмлама пулăшаççĕ. Çавна май, ачасене кăмăл-сипет правилисемпе нормисене харпăрлама условисем туса параççĕ.

Çитĕннисем ачасене хăйсен опычĕ шайĕнче харкам кăмăл-туйăмне, пăшăрханăвне, курăмне хăйсем пултарнă пек палăртма майсем туса параççĕ.

Çак майсем ачасен пуплевне, хутшăну пултарулăхне аталантарас ĕçре тĕпре тăраççĕ. Çакă вĕсен сăмах йышне анлăлатать, вĕсен хăйсен шухăшне çыхăнуллă палăртас, хăйсем çине яваплăх илес ăслай-хăнăхăвĕсене аталантарать.

Çитĕннисем вĕсен ĕç-хĕлĕпе, кăмăл-туйăмĕпе, туртăмĕсемпе интересленни, вĕсене хăйсен вăй-халне ĕненме, шанма вĕрентет.

Пĕрлĕхлĕ ĕçе йĕркелеме-хутшăнма, тĕслĕхрен ĕç-хĕле планлама, унăн шалашĕпе кирлĕ хатĕрĕсем суйлама май пурри, ачасене малашне общество пурнăçне харкам тĕллĕн хутшăнма хатĕрлет.

Çитĕннисем ачасен социаллă хăнăхăвĕсене аталантарма пулăшаççĕ: хирĕçӳллĕ лару-тăрура тӳрех хутшăнмаççĕ, ачасене хирĕçĕве хăйсем тĕллĕн татса пама ирĕк параççĕ. Кирлĕ чухне çеç пулăшаççĕ. Çитĕннисем ачасене ансат кăмăл-сипет правилисене, килти, урамри хăрушсăрлăх правилисене харпăрлама пулăшаççĕ. Ачасене таврари çут çанталăка, этем хăй аллипе тунă япаласене упрама, яваплă пулма вĕренме условисем туса параççĕ. Çавăн пекех ачасене хăрушсăрлăх тыткаларăш правилисене хăйсен тата ытттисен тĕслĕхĕсем çине тайăнса, вăл е ку пулăмсемпе ĕçсене ăнлантарса пулăшаççĕ.

*Вăйă ĕç-хĕлне аталантарас ĕçре*

Çитĕннисем ачасене ирĕклĕ выляма условисем туса параççĕ. Сюжетлă-рольлĕ, дидактикăллă, тата вăйăллă ĕç-хĕл йĕркелеççĕ, ачасене унта хутшăнма хавхалантраççĕ. Ачасен вăйăри ăславлăхне ырлаççĕ. Тĕрлĕ ĕç-хĕл тĕсĕсенче, режим саманчĕсене пурнăçланă чухне дидактика вăййисемпе, вăйă мелĕсемпе усă кураççĕ.

Программа Организацие ачасен социаллă хутшăну аталăнăвне йĕркелессин меслечĕсемпе формисене суйлама ирĕк хăварать. Çавăн пекех вариативлă вĕренӳ программисемпе усă курма та ирĕк пур.

**Ăс-тăн аталанăвĕ**

Пĕлӳлĕх аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– ачасен пĕлес, интересленес активлăхне, пултарулăхне аталантарни;

– таврари чăнлăх çинчен мĕн пĕлнине аталантарни.

*Ачасен пĕлес, интересленес активлăхне, пултарулăхне аталантарас ĕçре*

Çитĕннисем япалапа пуян талккăш йĕркелеççĕ. Ачасен нумай пĕлес кăмăлне, йăлтах тĕпчес, тĕрлĕ материалсемпе экспериментсем ирттерсе туртăмне ырлаççĕ.

Ачан чи кĕçĕн ӳсĕмренех тĕпчев активлăхĕ, таврари япаласемпе, вĕсен пахалăхĕсемпе интересленесси палăрать. Виçĕ-пилĕк çулсенче вара унăн таврапĕлӳлĕх уçлăхĕнчи пулăмсене курас-уçас, вĕсен çыхăну-хутшăнăвĕсене палăртас мехелĕ те пур.

Кулленхи пурнăçрах ача çут çанталăк объечĕсемпе – сывлăшпа, шывпа, вут-кăварпа, çĕрпе, çутăпа тата çут çанталăкри ытти чĕрĕ тата чĕрĕ мар тĕрлĕ объектпа хутшăнас-çыхăнас тĕлĕшпе тĕрлĕ енлĕ опыт пуçтарать. Ăна çут çанталăк пулăмĕсене сăнама, вĕсене тĕпчеме, экспериментсем ирттерме килĕшет. Вăл çут çанталăк пулăмĕсене ăнлантарса тĕрлĕ гипотеза калăплать, хăйĕн теорине йĕркелет. Çапла çут çанталăк ансат саккунĕсемпе паллашать, çут çанталăкри çыхăну-хутшăнусене ăнланма хăтланать.

Тĕрлĕ материалпа ĕçлеме, ансат опытсемпе экспериментсене хутшăнма май пурри ачан ăс-тăн тата кăмăл çирĕплĕхне аталантарс ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ, çакă ăна тĕнчен пĕрлĕхлĕ ӳкерчĕкне курма пулăшать. Ача таврари тĕнчере çав тери нумай вăрттăнлăх пуррине, вĕсене уçса памаллине ăнланса пырать. Çапла вара ачана çут çанталăка малашне мĕн тĕлĕшĕнчен тĕпчемелли курăнма пуçлать, унăн хăйĕн пĕлĕвĕсене тарăнлатас, анлăлатас туйăмĕ çирĕпленсе пырать. Ачасен тĕпчев активлăхне тытса пынипе пĕрлех педагог пĕлӳлĕх вăййисем йĕркелет, ачасене тĕрлĕ аталантару хусканăвĕсемпе ăмăртусене явăçтарма тăрăшать. Тĕслĕхрен, лото, шашка, шахмат, калăплани тата ытти те.

*Таврари чăнлăх çинчен мĕн пĕлнине аталантарас ĕçре*

Педагогсем ачасене таврари тĕнчепе çут çанталăка, хăйпе ытти çынсене лайăхрах пĕлме, математика, экологи наукисен ансат ăнлавĕсене уçăмлама-харпăрлама майсем туса параççĕ. Çитĕннисем кĕнекесем вулаççĕ, калаçусем, эксркурсисем ирттереççĕ, ачасемпе пĕрле тĕрлĕ фильм пăхаççĕ, иллюстрацисем сăнаççĕ. Ачасене тин кăна пĕлнĕ пулăмсемпе событисем

çинчен ыйтусем пама, вĕсене сӳтсе явма, гипотезăсем калăплама хавхалантараççĕ.

Социокультура хутлăхне ăнкарса пынă май ачасем урамсен ячĕсемпе, кил-çуртсемпе, организацисемпе, вĕсем мĕн тума кирлипе, транспортпа, çулçӳрев хăрушсăрлăхĕн правилисемпе, çынсен тĕрлĕ профессийĕсемпе паллашаççĕ.

Обществăра йышăннă нормăсемпе правилăсене, пахалăхсене харпăрласси ачасемшĕн харкам пурнăçĕ, унти лару-тăру, вĕсене сӳтсе явни урлă ăнăçлăрах пулса пырать.

Ачасен пĕлӳлĕх аталанăвĕшĕн ирĕклĕ вăйă питех те пĕлтерĕшлĕ. Ачасен кăмăлне тата мĕнле выляс туртăмне шута илсе аслисем вĕсене вăйăра тĕрлĕ роль пама, кирлĕ чухне сюжетăн тĕрлĕ вариантне, вăл шутра историпе тата культурăпа, çынсен социумри хутшăну правилисемпе çыхăннисене те, хăйсене шутласа аталантарма условисем туса параççĕ. Кулленхи пурнăçри хутшăнура, аслисене сăнаса ача хăйĕн математика пултарулăхĕсене аталантарать: шутлав, хисеп çыншăн мĕн тери пĕлтерĕшлине ăнланса пырать. Таврари япаласен калăпăшĕ, капашĕ, йывăрăшĕ çинчен; вăхăт тата талккăш, саккун тата тытăм çинчен пĕлӳсем туянать.

Çак ĕçе пур кăмăлтан хутшăннă май ача шкулчченех математика ăнлавĕсене харпăрласа пырать.

Шкулчченхи ӳсĕмре тавралăхри шут-хисеп пулăмĕсене ăнланни ачасене малашне шкулта тата пурнăç тăршшĕпех математикăна ăнăçлă вĕренсе пыма пулăшать.

Çавăнпа та шут-хисеп вăрттăнлăхĕсене харпăрласси вĕренĕвĕн малтанхи тапхăрĕнчех савăнăçлă, пур кăмăлтан пулса пымалла.

Математика никĕсне палăртнă чухне кашни уйрăм ачан мехелĕ тата туртăмĕ расна пулнине, çавăна май вĕсем шут-хисеп вăрттăнлăхĕсене харпăрласси те тĕрлĕрен пулса пынине шута илмелле.

Программăри вĕренӳ уçлăхĕн интеграци принципĕпе килĕшӳллĕн математика содержанийĕ программăн ытти пайĕсемпе çыхăнса-шайлашса тăмалла. Уйрăмах математика аталанăвĕ социаллă-коммуникативлă тата пуплев аталанăвĕсемпе çыхăнмалла. Ачан математика шухăшлавĕн аталанăвĕ вăл ытти ачасемпе тата аслисемпе конкретлă ситуацисенче хутшăннă май пулса пырать, амаланать.

Педагогсем кулленхи пурнăçри лару-тăрăва май пур таран математика аталанăвĕ валли усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, япаласемпе пулăмсене ушкăнлаççĕ, ĕç йĕркине «малтан çак», «унтан çакă...» (вăхăт куçăмĕ, юмахсен сюжечĕсенчи ĕç-хĕл йĕрки тата ытти те) аталанăвне палăртаççĕ. Вĕсен

талккăша йышăнас ăслай-хăнăхăвĕсене (малти, хыçалти, юнашар, сылтăмра, сулахайра тата ыт. те ) калăплаççĕ. Пур ĕç-пулăма та сăмахпа каласа ăнлантарса пыраççĕ.

Математика элеменчĕсене музыка, ташă, спорт занятисене те кĕртме пулать. Юрă-кĕвĕ занятийĕсенче ташă ритмне харпăрланă чухне, ӳт-пӳ хăнăхтарăвĕсене тунă чухне ачасем шутлама вĕренеççĕ, вĕсен талккăш координацийĕ аталанать. Çак тĕлллевпе педагог ачасемпе пĕрле математика пĕлĕвĕсене сасăлантарса пырать. Тĕслĕхрен, «икĕ алă», «икĕ ура», «мăшăршарăн тăрăр» тата ытти те, «пĕрремĕш, иккĕмĕш тесе шутлăр», «командăра тăваттăн вылятпăр», «кĕвĕçемĕн хусканусем тăватпăр: пĕрре, иккĕ, виççĕ», «çавракан тăратпăр» тата ытти те.

Математика элеменчĕсем ачасен ӳкерчĕкĕсенче (капăшсем, тĕрĕсем), купаланă-йăваланă чухне тата ытти ăславлă ĕçĕсенче те пулма пултараççĕ.

Педагог ачасене тивĕçлĕ сăмах-ăнлавсемпе усă курма тимлеттерет (çавраka, пысăк, пĕчĕк, спираль пек – шуй (улитка) çурчĕ çинчен; тăваткал, виçкĕтеслĕ – чӳречеллĕ çурт çинчен тата ыт. те.)

Ачасен талккăшри ориентаци (сулахай, сылтăм, малалла, хыçалалла тата ыт. те); япалсене танлаштарас, уйăрас, ушкăнлас, шутпа пысăкăш йĕркине ăнланас; тĕрлĕ шайлашăва палăртас (пысăк – пĕчĕк, ансăр – сарлака, вăрăмрах – кĕскерех, çăмăлрах – йывăртарах тата ыт. те); вăхăта тытăмлакан тĕп ăнлавсемпе (малтан – кайран, ĕнер – паян – ыран, уйăхсемпе кунсем ячĕсем); уйăхсен, çулталăк вăхăчĕсен, талăк вăхăчĕсен ячĕсене тĕрĕс калас пултарулăх аталанать. Ачасем геометри капăшĕсем, япаласемпе объектсен паллисем çинчен (çавраka, кĕтеслĕ, çавăн чухлĕ енлĕ), геометри фигурисем (куб, цилиндр, шар) çинчен пĕрремĕшле пĕлӳ туянаççĕ.

Ачасем числосене сăмахпа мĕнле палăртмаллине вĕренеççĕ. Тĕрлĕ объектсене (япаласем, сасăсем тата ыт. те) вуннă, çирĕм тата ытларах та таран (ачасен харкам уйрăмлăхĕнчен килет) шутлама пуçлаççĕ.

Япаласен шутне  хисеппе мĕнле палăртнине ăнланма пуçлаççĕ. Хисеппе шута, вăрăмăшне, йывăрăшне тата укçа шутне палăртма пулнине, хисеп (число) кодировка тата маркировка мелĕ пулнине (телефон номерĕ, почта номерĕ, автобус маршучĕн номерĕ) ăнланса пыраççĕ.

Ачасен «пысăк», «пĕчĕк», «тан», ăнлавсемпе усă курасси, шайлаштарасси (мĕнле тăтăш, мĕнле нумай, мĕн чухлĕ нумай), пуплевре геометри ăнлавĕсемпе усă курасси (виçкĕтеслĕх, тăваткал (квадрат), куб, шар, цидлиндр, пăнчă, ен, кĕтес, талккăш) аталанать.

Пысăках мар, ултă-вуннă объект таранччен кĕрекен пĕрлĕхе куçпа виçсе йышăнас пултарулăх аталанать.

Математика пӗлӳ-ăслайӗсемпе кулленхи пурнăçри лару-тăрура (тĕслĕхрен, чей чашăкне миçе кашăк сахăр ярать), тĕрлĕ вĕренӳ ĕçĕ-хĕлĕнче (тĕслĕхрен, кубиксене пĕр тан валеçсе пама) усă курас пултарулăх аталанать.

Шутлама, танлаштарма, ушкăнлама, кăларса хума тивĕçлĕ шут-хисеп хатĕрĕсем пурри ачасен математика аталанăвĕн ăнăçлăхне самай ӳстерет.

Программа Организацие ачасен ăс-тăн аталăнăвне йĕркелессин меслечĕсемпе формисене суйлама май парать. Çавăн пекех вариативлă вĕренӳ программисемпе усă курма та ирĕк пур.

**Пуплев аталанăвĕ**

Пуплев аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– чĕлхе тата пуплев культурин никĕсне калăплани, ачан пуплевне пур енлĕн аталантарни;

– ачана илемлĕ литературăпа паллаштарни, вулав культурине явăçтарни.

*Чĕлхе тата пуплев культурин никĕсне калăплас, ачан пуплевне пур енлĕн аталантарас ĕçре*

Ачан пуплевне аталантарасси вĕсен ытти çынсемпе хутшăнăва кĕрессипе, итлеме пĕлнипе, калакан пуплевне йышăнма, хăйĕн шухăшне тивĕçлĕ кăмăл-туйăмпа палăртассипе, урăхла каласан унăн социаллă хутшăну аталанăвĕпе тачă çыхăннă.

Пуплевĕ туллин аталанни шкулчченхи ачана хутшăнусем йĕркелеме, хăйĕн кăмăл-туйăмĕсемпе ыттисемпе пайланма пулăшать. Çакă пĕр-пĕрне ăнланма, хирĕçӳллĕ лару-тăрăва татса пама, пуплев ĕçĕсене йĕркелеме май парать.

Пуплев тĕп хутшăну хатĕрĕ пулса ачана калаçусенче, вăйăсенче, тĕрлĕ проектра, спектальсенче, занятисенче тата ыт. те хутшăнса хăйĕн харкамлăхне кăтартма май парать. Педагогсен ачасене тĕрлĕ ĕç-хĕл тĕсĕсенче хутшăнма хавхалантармалла. Тĕслĕхрен, ача-пăча ӳкерчĕкĕсене, калав-юмахсене сӳтсе яваççĕ тата ыт. те.

Пуплеве харпăрлани (монолог тата диалог тĕсĕсене) хăйне уйрăм процесс мар. Вăл хутшăну процесĕнче пулса пырать: ачасем (хăйсем хушшинче е аслисемпе) хăйсене кăсăклантаракан пулăма, япаласене, хăйсем хутшăнакан ĕçсене сӳтсе явнă май. Çапах та ачасен пуплевне калăплас, аталантарас тĕлĕшпе ятарлă ĕçлени-тимлени питех те пĕлтерĕшлĕ. Çапла вара ачасен пуплев аталăнăвне хавха кӳни кулленхи педагогика ĕç-хĕлĕнче пур вĕренӳ уçлăхĕсенче тĕп витерекен принцип пулмалла.

Çитĕннисем ачасен пуплев культурине; сăнарлă палăртуллă, грамматика тĕлĕшĕнчен вырăнлă, тĕрĕс пуплев калăплас; фонетика сисĕмне, сасă, сăмах тĕрĕс калас ăслай-хăнăхусене калăплама тата аталантарма майсем туса параççĕ. Сăвăсем, хăвăрткаларăшсем, тасакаларăшсем, юрăсем пăхмасăр каланине ырлаççĕ. Пуплев вăййисем йĕркелеççĕ, сăмах ăславлăхне амалантараççĕ.

Педагог ачана хăй тавраш̆ĕнчи пурнăçра тĕл пулакан пулăмсенчен чĕлхепе çыхăннисене уйăрса илме, пуплев тытăмĕн уйрăм пайĕсене чухлама, вĕсене ăса хывма, вĕсемпе активлă усă курма вĕрентессине ятарласа тимлет. Çавăн пекех пуплевре чĕлхен тĕрлĕ майĕпе усă курма вĕрентессине те ятарласа сăнаса пырать. Çак тĕллевпе тĕрлĕ хăнăхтару тутарать.

Ачан çыхăнуллă калу-пуплевĕн аталанăвĕ пуплев тытăмне, функцийĕсене ăнкарма пултарни уншăн малашне пуплев ĕç-хĕлĕн ытти тĕсĕсене (вулав, çыру) харпăрламалли никĕс пулса тăрать. Ачасен пуплевне аталантарнă май педагог вĕсем сăмах, сасă çинчен пĕлнине тарăнлатать, сăмахсен сасă тишкерĕвне тăвас ăслайне çивĕчлетет. Ача предложени çинчен малтанхи пĕлӳ туянать. Вĕсен предложенисене тишкерес ăслай калăпланса пырать. Çавна май малашне вулама-çырма вĕрентессин никĕсĕ хывăнать.

*Ачана илемлĕ литературăпа паллаштарас, вулав культурине явăçтарас ĕçре*

Ачасен ăнланас мехелне аталантарас тĕллевпе çитĕннисем вĕсене кĕнекесем вуласа параççĕ, вуланин содержанине пĕрле аса илеççĕ, сӳтсе яваççĕ. Вулама пултаракан ачасене ырласа хăйсем тĕллĕн вулама хавхалантараççĕ.

Педагог ачасене литература хайлавĕсен жанр уйрăмлăхĕсемпе паллашма, палăртуллă сăмаха асăрхама, унăн текстри пĕлтерĕшне ăнланма пулăшать. Хайлавсенче çырса кăтартнă çынпа çын хушшинчи кăткăс хутшăнусене, геройсен хăталанăшĕсен уçăмлă тата пытарăнчăк сăлтавĕсене ăнланассине тарăнлатма пулăшать.

Ачасен пуплевпе кулленхи хутшăнура усă курас пултарулăх активлă аталанать. Çавăн пекех пуплевпе пĕлӳлĕх-шырав, ӳнерпе илем, социаллă хутшăну тата ытти аталану тĕсĕсенче усă курасси анлăланать.

Аслисем *мĕншĕн?*, *хăçан?* ыйтусене хуравласа ачасене кулленхи пулăмсен йĕркине, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсене, çыхăну уйрăмлăхĕсене тимлеттерсе, ачасем палăртнă идейăсене аталантарса, сăмахпа хушса вĕсене пуплевпе пĕлӳлĕх, шыравлăх аталанăвĕнче усă курма хавхалантараççĕ. Тĕслĕхрен, ача: «Пăхăр-ха çак йывăçа», – тет. Педагог ăна: «Ку хурăн, пăх-ха унăн папкисем тулнă, часах пĕрремĕш çулçăсем тухаççĕ», – тесе хуравлать.

Пуплевĕ çителĕклĕ аталанайман ачасене çитĕннисем ыйтусене сăмахпа кăна мар, пит-куç вылявĕпе, хусканусемпе тата ятарлă хатĕрсемпе усă курса хуравлама ирĕк параççĕ.

Организацири аталантаруллă япала хутлăхĕнче ачасен тĕрлĕ литература изданийĕсемпе ирĕклĕ усă курма май пурри; вĕсем валли хăйсен ӳсĕмне тивĕçлĕ кĕнеке пăхма, вулама ятарлă вырăн туса пани; хушма материалсем, тĕслĕ плакат, картинăсем, ӳкерчĕклĕ хайлавсен, литература хайлавĕсемпе сăвă-юрă пуххисем тата ытти материал пулни ачасен пуплевне аталанма пулăшать.

Программа Организацие ачасен пулев аталăнăвне йĕркелессин меслечĕсемпе формисене суйлама ирĕк хăварать. Çавăн пекех вариативлă вĕренӳ программисемпе усă курма та ирĕк пур.

**Ӳнерпе илемлĕх аталанăвĕ**

Ӳнерпе илемлĕх аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– ачасен таврари чăнлăх илемĕпе кăсăкланас туйăмне аталантарни, вĕсене ӳнерĕн тĕрлĕ тĕсĕпе, жанрĕпе (сăмах, кĕвĕ, сăнарлă ӳнер), вăл шутра халăх пултарулăхĕпе паллаштарни;

– ачасен кĕвĕ, илемлĕ литература хайлавĕсене, халăх сăмахлăхне йышăнас пултарулăхне аталантарни;

– тĕрлĕ ӳнер тата илем ĕç-хĕлне явăçтарни, ачасен хăйсен ăславлăх туртăмне, пуçарулăхне аталантарни.

*Ачасен таврари чăнлăх илемĕпе кăсăкланас туйăмне аталантарас, вĕсене ӳнерĕн тĕрлĕ тĕсĕпе, жанрĕпе (сăмах, кĕвĕ, сăнарлă ӳнер), вăл шутра халăх пултарулăхĕпе паллаштарас ĕçре*

Программа ӳнер тата илем аталанăвĕн вĕренӳ уçлăхне ачасене тĕнче илемне курса савăнма; ӳнерпе культурăна; сăнарлă ӳнер, кĕвĕ, литература ăславлă ĕç-хĕлне явăçтарнине те кĕртет.

Ачасене тĕнче илемне тĕрлĕ туйăм органĕсем урлă курма-йышăнма вĕрентмелле. Çитĕннисем ачасене сенсор опытне пухма; туйăм тĕнчине пуянлатма; çут çанталăк, таврари тĕнче илемне курса хавхаланма; хăйсен илемлĕ хайлавсемпе халăх сăмахлăхĕн персонажĕсемпе пĕрле кулянас, хавасланас мехелне аталантарса пыма майсем туса параççĕ. Çитĕннисем ачасене классикăлла литература хайлавĕсемпе, сăнарлă ӳнер, кĕвĕ, театр ӳнерĕпе, халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе паллаштараççĕ.

Ӳнер альбомĕсенчи иллюстрацисене сăнаççĕ. Çут çанталăка, музейсене экскурсисене тухса çӳреççĕ. Тивĕçлĕ содержаниллĕ фильмсем кăтартаççĕ. Çавăн пекех ӳнер тата илем информацийĕн ытти çăл куçĕсемпе усă кураççĕ.

Ачасен кĕвĕ, илемлĕ литература хайлавĕсене, халăх сăмахлăхне йышăнас пултарулăхне аталантарас ĕçре аслисем вĕсене хăйсен кăмăл-туйăмне ăславлăх ĕç-хĕлĕ урлă палăртма майсем туса параççĕ.

Ачасене ӳнер тата илем ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ тĕсне, сюжетлă-рольлĕ тата режиссерла вăйăсене явăçтараççĕ. Хăйсем шутланине пурнăçлама тĕрлĕ хатĕрпе, материалпа, мелпе усă курма пулăшаççĕ.

Педагог ачана кашни ӳнерĕн хăйĕн сăнарлăх, илемлĕх мелĕсем пуррине; ӳнер тĕнчине курăмлă сăнарсем урлă кăтартса панине (унăн тĕп мелĕсем: тĕс, кĕвĕ, форма тата композици) ăнланма пулăшать. Ачана илеме курса ăнланас тата харпăр хăйĕн илемлĕх мехелне уçса парас пултарлăхне палăртма тивĕçлĕ майсем туса парать.

Сăнарлă ӳнер ĕç-хĕлĕнче (ӳкерессия, йăваласси), сăнарлă ӳнерпе конструкци ĕç-хĕлĕнче çитĕннисем ачасене тĕспе экспериментсем ирттерме, тĕрлĕ композици шутласа калăплама, тĕрлĕ ӳнер техникине харпăрлама, тĕрлĕ материалпа, хатĕрпе усă курма сĕнеççĕ, пулăшаççĕ.

Педагог ачасене илемлĕ ӳнер хайлавĕсемпе кăсăкланма май паракан; вĕсен общество пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне, кăмăл-сипет пахалăхне мĕнле ăнланнине тантăшĕсемпе тата çитĕннисемпе сӳтсе явма пулăшакан лару-тăру йĕркелет.

Ăстаçă ӳнер хайлавне мĕнле тунине сăнама, çав тĕллевпе усă куракан тĕрлĕ мелпе паллашма, тĕрлĕ материалăн тĕрлĕ пахалăхне асăрхама май парать.

Илемлĕ сăнар хайлас тĕллевпе харпăр хăй тĕллĕн тĕрлĕ мелпе усă курма хăнăхтарса пырать.

Кĕвĕ ĕç-хĕлĕнче (ташăсем, юрлани, музыка инструменчĕсемпе калани) пластика хатĕрĕсем, ритм, темп, сасă çӳллĕшĕпе вăйĕ урлă тĕрлĕ ӳнер сăнарĕ калăплама сĕнеççĕ, пулăшаççĕ.

Педагог ачан чун-чĕм культурин питĕ паха енне – юрă-кĕвĕ туйăмлăхне аталантарать. Ачана музыка пĕлĕвĕ панă май ăна кĕвĕ-юрă илемне чун-чĕререн ăнланса йышăнма, хăй пултарнă таран юрлама, ритмлă ташăсем ташлама, музыка инструменчĕсемпе усă курма, юрă-кĕвĕ хайлама вĕрентсе пырать.

Çитĕннисем ачасене театр ĕç-хĕлĕнче, сюжетлă-рольлĕ тата режиссерла вăйăсенче чĕлхе хатĕрĕсемпе, пит-куç вылявĕпе, хусканусемпе, интонаципе

персонажсен характер уйрăмлăхĕсене, кăмăл-туйăмĕсене, пăшăрханăвĕсене кăтартма сĕнеççĕ, пулăшаççĕ.

Программа Организацие ачасен ӳнерпе илемлĕх аталăнăвне йĕркелессин меслечĕсемпе формисене суйлама ирĕк хăварать. Çавăн пекех вариативлă вĕренӳ программисемпе усă курма та ирĕк пур.

**Ӳт-пӳ аталанăвĕ**

Ӳт-пӳ аталанăвĕн уçлăхĕнче ***вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕп задачисем*** çакăн валли условисем тăвассипе çыхăннă:

– ачасем сывă пурнăç йĕрки хакĕсене харпăрласа пыни;

– ача хăй ӳт-пĕвĕ, ӳт-мехелĕсем çинчен мĕн пĕлнине аталантарни;

– ача хускану опытне туянни тата хускану активлăхне аталантарни;

– уйрăм спорт тĕсĕсемпе паллашни, шавлă хускануллă правилăсемлĕ вăйăсем выляма вĕренни.

*Ачасем сывă пурнăç йĕрки хакĕсене харпăрласа пырас ĕçре*

Педагогсем ачасен хăйсен сывлăхĕшĕн яваплă пулас туйăмне аталантарма пулăшаççĕ. Вĕсем ачасене организмшăн мĕн усăллă, мĕн сиенлĕ пулма пултарнине каласа параççĕ. Сывă пурнăçăн ансат правилисемпе нормисене, вăл шутра тĕрĕс апатлану правилисемпе нормисене тытса пынин, сывлăха çирĕплетнин уссине ăнланма пулăшаççĕ. Аслисем ачасене хăйсен сывлăхне упрама май паракан усăллă, вăл шутра гигиена хăнăхăвĕсене те, калăплама пулăшаççĕ. Вĕсене сывлăха упрассипе çыхăннă тĕрлĕ мероприятие активлă хутшăнма майсем туса параççĕ.

*Ача хăй ӳт-пĕвĕ, ӳт-мехелĕсем çинчен мĕн пĕлнине аталанатарас ĕçре*

Аслисем ачасем хăйсен ӳт-пĕвĕ çинчен, хусканăвĕпе ĕçĕсем çинчен мĕн пĕлнине аталантарассине ятарласа тимлеççĕ.

Ачасен утас-чупас, хускалас, куçас туртăмне тивĕçтерес тĕллевпе çитĕннисем шалти пӳлĕмсенче те, тулаш территоринче те вырăнлă хатĕрсем вырнаçтарнă талккăш уçлăхне йĕркелеççĕ. Вăйăсем, ирĕклисене те правилăллисене те, выляттараççĕ. Ачасене хускалса хавасланмалли, вĕсен вăр-варлăхне, хускану координацине, вăйне, пластикине аталантарма, тĕревпе хускану системине калăплама май паракан занятисем ирттереççĕ. Ачасен хускануллă вăйăсем выляс, спорт снарячĕсем çинче ĕçлес, чупас, сикес, çӳлеллле хăпарас, перес туртăмне-кăсăклăхне тытса пыраççĕ. Вĕсене хускану координацине, вăр-варлăхне, пластикипе хăвăртлăхне, шултра тата вĕтĕ моторика аталанăвне пулăшакан ӳт-пӳ хăнăхтарăвĕсем тума хистеççĕ. Çав хускануcемпе хăнăхтарусем ачасен организмне сиен ан кӳччĕр тесе сăнаса тăраççĕ.

Çитĕннисем ачасемпе пӳлĕмре те, уçă сывлăшра та спорт вăййисем, спорт уявĕсем, физкультура занятийĕсем ирттереççĕ. Ачасене конькипе, йĕлтĕрпе, велосипедпа ярăнма, ишме тата ыт. майсем туса параççĕ, вĕсем тĕрлĕ спорт тĕсĕпе кăсăкланассине аталантараççĕ.

Программа Организацие ачасен ӳт-пӳ ааталăнăвне йĕркелессин меслечĕсемпе формисене суйлама ирĕк хăварать. Çавăн пекех вариативлă вĕренӳ программисемпе усă курма та ирĕк пур.

## 2.3. Çитĕннисемпе ачасен хутшăнăвĕ

Çитĕннисемпе ачасен хутшăнăвĕ ачан аталăнăвĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ, вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пĕтĕм енĕсене витерĕнет.

Ача харкам ĕçре те, çитĕннисем пулăшнипе те таврари тĕнчепе паллашать, вылять, ӳкерет, çынсемпе хутшăнать. Пĕтĕм этемлĕх ĕç-хĕлĕсен, культура тĕслĕхĕсене явăçтарни те (пурнăç культури, тĕнчене тĕпчени, пуплев, хутшăну тата ыт. те), культура ăслай-хăнăхăвĕсене харпăрласси те аслисемпе тĕрлĕ ĕç-хĕлте хутшăннă май пулса пырать. Аслисемпе хутшăннă май, харкам тĕллĕн япаласен талккăш уçлăхĕнче ĕçленĕçемĕн ача культура ăслайĕсене харпăрланине культура практики тесе палăртаççĕ.Çак процесра педагогсем кирлĕ чухне ĕçтеш пек, кирлĕ чухне ертӳçĕ пек вырăнлă хутшăнса ачан ĕç-хĕлне сăлтавлассине аталантарса пырсан çеç, вăл пĕтĕмĕшле культура ăслайĕсене туллин харпăрлама пултарать.

Çак ĕçре хутшăну содержанипе хутшăну характерне мĕнле йĕркелени те пысăк вырăн йышăнать. Хутшăну содержанийĕ ача ыйтăвĕсен шайне тивĕçтерет пулсан, вăл çитĕннисене кăмăллать, вĕсемпе хутшăнма туртăнать, хутшăну ăнăçлăхĕ ӳсет.

Психологи тĕлĕшĕнчен килĕшӳллĕ, майлă хутшăну йĕркелени, пĕр-пĕрне ĕненсе хутшăнни, çитĕннисем ачасен нушисене тивĕçтерме тимлени, кĕçĕннисем аслисене хисплени вĕсен чи кирлĕ пахалăхсене аталантарма май парать: пултарулăх ĕçне туртăнни, пуçарулăх, харпăр хăй тивĕçлĕхне туйни, хăйне тивĕçлĕ пек хаклама вĕренни.

Организацире тата çемьере аслисемпе ачан ĕçтешле хутшăнăвĕсем вĕрентнипе вырăнлă черетленсе пыраççĕ. Ĕçтешле хутшăнусен тĕп характеристики – ачапа çитĕннисем ĕç-хĕл процессне пĕрле хутшăнни. Çитĕннисем лартнă тĕллевсене пурнăçлама ачасемпе пĕрле, ытларах чухне опытлăрах, пĕлекенрех ĕçтеш пек хутшăнаççĕ.

Ачан харкамлăхне амалантарма пулăшакан хутшăну йĕркелес тесен кашни валли психологи тĕлĕшĕнчен канăçлă лару-тăру тума тăрăшас пулать. Ачана унăн кăмăлне тивĕçтернине, уншăн пур майсемпе те тăрăшнине, ăна

пурте юратса пахаланине туйса тăма майсем туса памалла. Асли кĕçĕннине пĕр-пĕр стандартпа килĕшӳллĕ калăплама хăтланмасть, ачапа унăн харкам уйрăмлăхĕсене, характерне, йăлисене, интересĕсемпе туртăмĕсене шута илсе, хисеплесе хутшăнать. Вăл ачапа пĕрле савăнать, пăшăрханать. Ăна йывăрлăхсенче пулăшать, хавхалантарать. Унăн ăйййисемпе ĕçĕсене хутшăнать. Çитĕннĕ çын ачасене ытлашши вырăнсăр чарассинчен тата айăплассинчен тытăнса тăрать. Çакăн пек хутшăну ачара хӳтлĕх туйăмĕ çуратать, унăн харкамлăхне ăнаçлăн аталанма май парать, аслисене те кĕçĕннисемпе тăнăç хутшăну йĕркелеме май парать.

Ачан харкамлăхне хисеплесе хутшăнни унăн ырă енĕсене калăплама, аталантарма пулăшать. Вăл хăйне тата ыттисене хисеплеме вĕренет, мĕншĕн тесен ачапа аслисем мĕнле хутшăнни вăл харкама мĕнле йышăнассине, ыттисемпе мĕнле хутшăнассине питех те пысăк витĕм кӳрет. Хăйне юратсан, хисеплесе хутшăнсан, вăл харкама ытларах шанма пуçлать, йăнăшасран хăрамасть. Çитĕннисем ачана кирлĕ таран ирĕк парсан, ăна пулăшса пырсан, вăл хăй вăйне шанма пуçлать, йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмест, çине тăрса вĕсене татса пама çул-йĕр шырать.

Çитĕннисем ачан харкмлăхне шута илсе хутшăнни, ăна тиркемесĕр йышăнни вырăнсăр чараксем лартасран, айăпласран хăтараççĕ. Ача вара хăйĕн йăнăшĕсене йышăнма хăрамасть. Аслипе кĕçĕнни пĕр-пĕрне шанса хутшăнни ачана кăмăл-сипет нормисене чунтан ĕненсе харпăрлама пулăшать.

Ача хăйĕн йышăнăвĕсемпе хăтланăшĕсемшĕн яваплă пулма вĕренсе пырать. Мĕншĕн тесен çитĕннĕ çын май пур чухне яланах ачана суйлама ирĕк парать. Ачан хăйĕн шухăшне уççăн калама, кăмăла кайнă ĕç-хĕл, ĕçтешсене суйлама май пурри унăн харкамлăхне аталантрама, хăй йышăнăвĕшĕн яваплă пулма вĕренме пулăшать.

Ача хăй тĕллĕн шутлама вĕренсе пырать. Мĕншĕн тесен аслисем ăна хăйсем шутланă пек тума хистемеççĕ, ачана хăй шутланă пек тума пулăшаççĕ. Çапла майпа вăл хăйĕн кăмăл-туйăмне кăмăл-сипет нормисемпе килĕшӳллĕ палăртма вĕренсе пырать. Ачана хăйĕн савăнни-хурланнине, пăшăрханăвĕсене ăнланма, вĕсене сăмахпа палăртма пулăшса çитĕннисем унăн харкам-туйăмне кăмăл-сипет нормисемпе килĕшӳллĕ палăртас ăслайĕсене калăпланма пулăшаççĕ.

Ача ыттисене ăнланма, вĕсемпе пĕрле савăнма-хурланма вĕренсе пырать. Мĕншĕн тесен вăл çак опыта аслисемпе хутшăннă май харпăрлать те хăйĕн кулленхи хутшăнăвне куçарать.

Педагогсем психика аталăнăвĕнче ачасем пĕр-пĕринпе тĕрĕс хутшăннине шута илсе вĕсене пĕр-пĕрне пулăшма, хĕрхенме, ыттисен кăмăл-туйăмне ăнланма хăнăхтараççĕ, тантăшĕсемпе хутшăннă чухне хăй шухăшне

хăюллăрах хӳтĕлеме, вĕсемпе килĕшме, ыттисен интересĕсене уяма, харпăр сăмахне çрĕплетсе çине тăма вĕрентсе пыраççĕ. Çак тĕллевпе ачана ун таврашĕнчи çынсем çинчен, вĕсем мĕн кăмăлпа пурăнни çинчен ытларах каласа пама тăрăшаççĕ.

## 2.4. Педагогика коллективĕпе ачасен çемйисен хутшăнăвĕ

**Ашшĕ амăшĕсемпе (саккунлă представителĕсемпе) партнĕрла килĕштерсе хутшăнассин тĕллевĕпе задачисем**

Çемье ачан чи кĕçĕн, кĕçĕн тата шкулчченхи ӳсĕмĕсенчи аталанăвне пысăк витĕм паракан пирвайхи социализацин тата вĕренĕвĕн институчĕ пулать. Çавăнпа шкул çулне çитменнисен вĕренӳ программисене пурнăça кĕртекен педагогсен хăйсен ĕçĕнче çак факторсене шута илмелле: çемьери пурнăç условийĕ, çемье йышĕ, унăн йăли-йĕркипе хаклăхĕсем. Çавăн пекех педагогсен ашшĕ амăшĕсен (саккунлă представительсен) ачасене аталантарас тата ăс парас ĕçри пултарулăхĕсемпе çитĕнĕвĕсене те шута илмелле. Çемьепе тачă çыхăнса ĕçлени Организаци ĕçĕн ăнăçлăхне ӳстерет. Икĕ енĕ пĕр-пĕринпе диалогра пулсан кăна ача пурнăçăн урăх лару-тăрăвĕнче хăйне мĕнле тытнине пĕлме пулать. Çак информаци, ача çинчен нумайрах пĕлни, ашшĕ амăшĕсемпе (саккунлă представителĕсемпе) педагогсен партнĕрла хутшăнăвĕн, вĕсем ачасене вĕрентес тата ăс парас ĕçре пĕр-пĕрне шанса, ĕненсе пĕрле тачă ĕçлессин никĕсĕ пулать.

Диалогра пурнăçри улшăнусене, вĕренӳ программисен тĕрлĕ варианчĕсене тата çемье ыйтăвĕсене те шута илес пулать. Педагог вĕренӳ тата ăспару ĕçĕнче ашшĕ-амшĕсен (саккунлă представительсен) юлташĕ пулса тăрать. Унăн вĕсен пурнăç условийĕсемпе çыхăннă задачисене ăнламалла, çитĕннĕ çынсемпе ĕçлемелли принципсене пĕлмелле: вĕренӳ процесне хутшăнакансене тиркесрен тытăнса тăни, кашнине хăй шухăшне калама май пани, пурнăç çине тĕрлĕрен пăхнине хисеплени, пĕлӳ илес туртăма тивĕçтерни.

Çемьепе вĕренӳ тата ăспару ĕçĕнче партнерла хутшăнни ачасене ăнăçлă аталантарма майсем уçса парать.

Ĕçтешле ăнланса хутшăнни икĕ енĕ те ачасен ăспарăвĕшĕн яваплă пулнипе çыхăнать. Çавăн пекех партнерла хутшăнни çемьепе Организаци пĕр-пĕрне хисепленине, вĕсен пĕр тĕллевсемех пулнине, çав тĕллевсене пĕрле килĕштерсе пурнăçламаллине пĕлтерет.

Партнерсем ăспарăвăн пĕтĕмĕшле тĕллевĕсемпе меслечĕсене килĕштерсе суйлани, вĕсене пĕрле килĕштерсе пурнăçлани, çемье тата çемье

тулашӗнчи вӗренӳри вӗçе-вӗçӗнлӗхе тытса пыма, ик енӗн мехелне хушма, çӑмӑл мар ӗçре вӑй-хӑвата пӗрлештерме май парать.

Педагогпа çемье хушшинчи диалог уйрӑмах ачан хӑтланӑшӗсем тата аталану тӗлӗшӗнчен мӗнле те пулин кӑлтӑксем пулсан пӗлтерӗшлӗ. Йывӑрлӑхсене пӗрле тишкерни вӗсен сӑлтавӗсене вӑхӑтра палӑртма, пӗр тӑхтаса тӑмасӑр татса пама тивӗçлӗ çул-йӗр шырама май парать. Диалогра ашшӗ амӑшӗсем (саккунлӑ представительсем) педагогпа вӗренӳ тата ӑспару ӗçне мӗнле аванрах йӗркелесси пирки, Организаци тата çемье çак тӗлӗшпе мӗн тума пултарни çинчен канашлама пултараççӗ.

Педагогсем çемьене ача аталанӑвӗнче пулӑшса пыраççӗ, кирлӗ пулсан ытти специалстсемпе службӑсене (психолог, логопед, дефектолог тата ыттисен канашӗсем) явӑçтараççӗ.

Çапла майпа Организаци ачасен аталанӑвӗнче сиксе тухакан кӑлтӑксемпе йывӑрлӑхсене малтанхи тапхӑртах асӑрхаттарма пултарать.

Хисеплени, пӗр пӗрне шанни-ӗненни дилог ӑнăçлӑхӑн никӗсӗ пулать.

Педагогпа ашшӗ-амӑшӗсен (саккунлӑ представительсен) диалогӗ педагогика ӗç-хӗлне планланӑ чухне те кирлӗ. Педагогсем ачасен çемйинчи пурнăç йӗркине пӗлни вӗсене вӗренӳ задачисене ӑнăçлӑрах пурнăçлама май парать.

Педагогсен хӑйсен те ашшӗ-амӑшне (саккунлӑ представительсене) хӑйсен ӗçӗ çинчен, ачасем Организацире хӑйсене мӗнле тытни çинчен пӗлтерсе тӑмалла. Ашшӗ-амӑшӗ (саккунлӑ представительсем) яланах ачи Организацине ӑнăçлӑ хӑнӑхса, аталанса пытӑр тесен пӗрле мӗн тумаллине пӗлесшӗн.

Кун пек чухне хушӑран хушӑ хутшӑнни чӑн-чӑн партнӗрла хутшӑнӑва куçать.

Организаци ашшӗ-амӑшне (саккунлӑ представительсене) вӗренӳ ӗçӗнче те, уйрӑм занятисенче те активлӑ хутшӑнма сӗнме пултарать. Ашшӗ-амӑшӗ (саккунлӑ представительсем) Организаци пурнăçне хӑйсен ятарлӑ пӗлӳ-ӑслайне кӳме пултараççӗ: ачасене хӑйсен ӗçне чӗнеççӗ, вӗсем валли инсцинировкӑсем лартаççӗ, музейсемпе спектаклсене пӗрле çӳреççӗ, территорине тасатма, çӳп-çап пуçтарма пулӑшаççӗ, ачасен экскурсине илсе кайма хутшӑнаççӗ.

Проект ӗçӗ те ашшӗ-амшӗсене (саккунлӑ представительсене) явӑçтарма анлӑ майсем туса парать. Ашшӗ-амӑшӗ (саккунлӑ представительсем) проект планланӑ-хатӗрленӗ ӗçе те, уявсене те хутшӑнаççӗ. Çавӑн пекех вӗсем хӑйсем планласа, хӑйсен вӑйӗпе ятарлӑ мероприятисем те ирттерме пултараççӗ. Организаци ашшӗ-амӑшӗсем (саккунлӑ представительсем) хӑйсем мӗн

шутланине пӗр-пӗринпе сӳтсе явнине, ҫемьесем пӗр-пӗрне пулӑшнине ырлать.

## 2.5. Сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе тӳрлетӳ тумалли ӗҫӗн программи

Саплаштару ушкӑнсенче сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе пурнӑҫламалли вӗренӳ программин пӗтӗмӗшле калӑпӑшне палӑртнӑ чухне ачасен ӳсӗм уйрӑмлӑхӗсене, вӗсен аталанӑвӗн тӗп енӗсене, шкулччченхи вӗренӳ уйрӑмлӑхӗсене шута илеҫҫӗ. Вӑл шута тӗрлӗ ача-пӑча ӗҫ-хӗлне (вӑйӑ, хутшӑну, пӗлӳ, тӗпчев, продуктивлӑ ӗҫ-хӗл, музыка, ӳнер тата ыт. те) тумалли вӑхӑт, ӳт-пӳ тата психика тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасен ятарлӑ квалификациллӗ тӳрлетӗвне тӗрлӗ вӑхӑтра йӗркелени те кӗрет: режим саманчӗсенче, ачасен харкам ӗҫ-хӗлӗнче, ачасен ҫемйипе хутшӑннӑ май.

Шкулччченхи вӗренӳ программине пурнӑҫа кӗртекен Организацинчи саплаштару ушкӑнсенче вӗренӳ программисене пурнӑҫлас тӗлӗшпе лартакан задачӑсем шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ:

– ӳт-пӳ аталанӑвӗн, ӑс-тӑн, кӑмӑл-сипет, ӳнерпе илем тата харкам пахалӑхӗсене аталантарасси;

– вӗренӳ ӗҫ-хӗлӗн никӗсне калӑпласси;

– сывлӑха упрасси тата ҫирӗплетесси;

– ачасен ӳт-пӳ тата психика аталанӑвӗн кӑлтӑкӗсене тӳрлетесси;

– сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем валли те, ытти йӗркеллӗ аталанакан ачасем валли те, вӗсен ашшӗ-амӑшӗ (саккунлӑ представительсем) тата педагогика коллективӗ валли те хальхи вӑхӑт ыйтнине тивӗҫтерекен аталантаруллӑ япала талккӑш хутлӑхне йӗркелесси;

– ачасен пӗтӗмӗшле культурине калӑпласси.

Тӳрлетӳ-аталантарӳ ӗҫӗ сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасен ятарлӑ вӗренӳ нушисене, психологипе медицина тата педагогика комиссийӗн пӗтӗмлетӗвне шута илсе йӗркеленет.

Саплаштару ушкӑнӗсенче вӗренӳ процесне йӗркеленӗ май ҫак позицисене тӗпе хумалла:

1) шкулччченхи вӗренӳ организацисен специалисчӗсен (учитель-логопед, учитель-дефектолог, педагог-психолог) воспитательсен, хушма пӗлӳ паракан педагогсен сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе ӗҫлессин йӗркин тата содержанин регламенчӗ;

2) тьютор ӗҫӗн содержанипе регламӗнчӗ;

3) шкулччченхи вӗренӳ организацийӗн психологи, медицина тата педагогика консилиумӗн ӗҫӗн содержанийӗпе регламенчӗ.

Саплаштару ушкӑнсенче сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем валли шкулччenхи вӗренӗвӗн ансатлатнӑ тӗп вӗренӳ программи пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Саплаштару ушкӑнсенче икӗ программа вӑйра. Сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем валли шкулччenхи вӗренӗвӗн тӗп вӗренӳ программи ҫинче никӗсленсе ҫак ачасен психофизика аталанӑвне, вӗсен харкам мехелне шута илсе ансатлатнӑ вӗренӳ программи (инклюзивлӑ вӗренӳ программи) калӑпласҫӗ. Ку программа ачасен кӑлтӑкӗсене тӳрлетме, вӗсене социумра хӑнӑхма пулӑшмаллла. Ушкӑнри ытти ачасем шкулччenхи вӗренӗвӗн тӗп вӗренӳ программипе вӗренсе пыраҫҫӗ.

Ансатлатнӑ вӗренӳ программине калӑпланӑ чухне ҫакна шута илмелле:

– ача харкамлӑхне унӑн ӳсӗмӗпе, ӳт-пӳ тата психика уйрӑмлӑхӗсемпе шайлашуллӑ вӗренӳ тата ӑспару меслечӗсемпе усӑ курса калӑплани;

– сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасене кирлӗ пек аталанса пыракан тантӑшӗсемпе пӗрле вӗренме выРӑнлӑ пулӑшу вӗренӳ хатӗрӗсемпе тата педагогика мелӗсемпе усӑ курса воспитательсен, педагог-психологсен, учитель-логопедсен, учитель-дефектологсен пӗрлӗхлӗ ӗҫне йӗркелеме тивӗҫлӗ условисем туса пани;

– пӗтӗм ача-пӑча ӗҫ-хӗлне тата кулленхи лару-тӑрӑва йӗркеленӗ, мӗне те пулин татса панӑ, ӗҫӗн результатне палӑртнӑ, планланӑ, ӗҫ программине пурнӑҫланӑ, ӗҫ результатне пахаланӑ-хакланӑ чухне ачан харкамлӑхне аталантарассине шута илни.

Ача садне ҫӳреме пуҫласан пӗр уйӑх хушши пурте, вӑл шутра сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем те, педагогика тата психологи диагностикине тухаҫҫӗ.

Ача аталанӑвне тӗрӗсленин результачӗсемпе ансатлатнӑ вӗренӳ программине калӑпланӑ чухне усӑ кураҫҫӗ.

Ансатлатнӑ вӗренӳ программинче сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе ятарласа ӗҫлемелли ӗҫ-хӗлсен формисемпе тӗсӗсене, кашни ачан ӗҫ калӑпӑшӗпе содержанийӗ мӗнле пулмаллине, мӗнле ятарлӑ психологипе педагогика технологийӗсемпе, вӗренӳпе меслетлӗх материалӗсемпе, техника хатӗрӗсемпе усӑ курмаллине, тьютор ӗҫӗн шалашне палӑртаҫҫӗ.

Ансатлатнӑ вӗренӳ программине сӳтсе явма та, пурнӑҫлама та ачан ашшӗ-амӑшне (саккунлӑ представительсене) явӑҫтараҫҫӗ.

Программа тытӑмне ачасен психофизика аталанӑвӗпе мехелне, кӑлтӑксен тытӑмӗпе йывӑрӑшне шута илсе тӳрлетӳ программисен тивӗҫлӗ модулӗсене сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе мӗнле ӗҫлемеллине палӑртнӑ меслетлӗх сӗнӗвӗсен комплексне те кӗртеҫҫӗ.

Сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе ансатлатнӑ вӗренӳ программисем тӑрӑх ӗҫлесси ҫакна шута илсе йӗркеленет:

– кашни тапхӑртах ашшӗ-амӑшӗсен (саккунлӑ представительсен) хутшӑнӑвӗн уйрӑмлӑхӗсемпе шалашне;

– организацийӗн сотрудникӗсем хушшинчи хутшӑнӑвӑн уйрӑмлӑхӗсемпе шалашне;

– сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасемпе ӗҫлес формӑсемпе меслетсене суйламалли технологисене шута илмеллине;

– сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ача ыттисемпе пӗрле вӗрентессин тапхӑрӗсемпе малалла куҫма хатӗррине палӑртмалли критерисене, саплаштару ушкӑнӗсенче ачана тухӑҫлӑ аталанма тата ӑнӑҫлӑ хӑнӑхма условисем епле йӗркеленине.

Вӗренӳ программисене еплерех пурнӑҫа кӗртсе пынине шайлаштарасси шкулчченхи вӗренӳ организацийӗн психологи тата медицина, педагогика консилиумӗн ларӑвӗсенче пулса пырать. Унта вӗренӳ программине пурнӑҫлама хутшӑнакан пӗтӗм педагог тата специалистем хутшӑнаҫҫӗ.

## 3. ЙӖРКЕЛӲ ӖҪӖН ПАЙӖ

## 3.1. Ачасене аталанма май паракан психологипе педагогика условийӗсем

Программӑра ачана хӑйӗн ӳсӗм, харкам мехелӗсемпе интересӗсене шута илсе кирлӗ пек психологи тата педагогика условийӗсем йӗркелеме палӑртнӑ:

1. Ҫитӗннисемпе ачасен ***харкам аталӑнӑвне амалантаракан хутшӑну-ҫыхӑну***. Ҫакӑ кашни ачанах ӗҫ-хӗл, ӗҫтеш, ӗҫ хатӗрӗсем тата ыт. те суйлама май паракан лару-тӑру йӗркелессипе ҫыхӑнать; ҫӗнӗ пӗлӳ тата пурнӑҫра кирлӗ хӑнӑхусем харпӑрласси унӑн харкам опычӗ ҫинче никӗсленмелле.

2. ***Педагогика хаклавӗшӗн ориентир – ачан ӑнӑҫу кӑтартӑвӗсем*** пулмалла. Урӑхла каласан ачан хальхи тата малтанхи ҫитӗнӗвӗсене танлаштармалла, унӑн харкам хаклав пултарулӑхне ырламалла.

3. ***Вӑйӑ ӗҫ-хӗлне*** ача аталанӑвӗшӗн пӗлтерӗшлӗ фактор пек ***калӑпламалла***. .

4. Ачан ӳт-пӳ, социаллӑ, хутшӑну, пӗлӳлӗх, пуплев, ӳнер тата илем аталанӑвне ӑнӑҫлӑ йӗркелеме тата унӑн харкамлӑхне упраса хӑварма пулӑшакан ***аталантаруллӑ вӗренӳ уҫлӑхне йӗркелени***.

5. ***Репродуктивлă тата продуктивлă ĕç-хĕлсем шайлашăнса пыни***: ача-пăча тĕпчев, ăславлăх ĕç-хĕлĕсен культурăллă формисемпе тĕслĕхĕсене харпăрлас тĕлĕшпе йĕркеленĕ ĕç-хĕлсем; пĕрлĕхлĕ, харкам тĕллĕн, хускануллă тата хусканусăр активлăх формисем.

Ăспару ĕçĕн тухăçлăхĕпе ăнăçлăхĕ педагогика ĕç-хĕлне уçăмлă тĕллевлĕн, çирĕп планпа, вĕçе-вĕç çыхăнтарса пынинчен килни. Ăспару ĕç-хĕлĕ çут çанталăк йĕркипе, этем аталанăвĕн хăй майлăхĕпе килĕшсе тăни, çакă ачан уйрăмлăхĕсене шута илсе ăна пур енлĕн килĕшӳллĕ пĕрпĕтĕмлĕхре аталанма май пани.

6. Шкулчченхи ачан пур енлĕ аталанăвĕнче ***çемье пайрăмĕ пĕлтерĕшлĕ*** пулни.

**Педагогсен професси шайĕ,** вĕсен професси компетенцийĕсем, вăл шутра хутшăну компетенципе ачасен ĕç-хĕлне сăлтавлама пултарни, çав вăхăтрах интернетпа хăрушсăрлăх тĕлĕшĕнчен аталанса пыни.

## 3.2. Аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхне йĕркелени

Организацин аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕ (пăхăр: 3.9. пай – нормативлă меслетлĕх докуменчĕсен списокĕ) Стандарт ыйтнине тата санитарипе эпидимиологи правилисене тивĕçтермелле.

Организацири аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕ Программăна шут илсе калăпланă тĕп вĕренӳ программине пурнăçлама майсем туса памалла. Программăра аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхне мĕнле йĕркелес тĕлĕшпе çирĕп требованисем лартман. Организаци Программăн тĕллевĕсемпе задачисем тата принципĕсем çинче никĕсленсе аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхне хăй тĕллĕн йĕркелеме пултарать.

Аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхне йĕркеленĕ чухне Организацин хăйĕн вĕренӳ ĕç-хĕлĕн, социокультура, экономика тата ытти условисен уйрăмлăхĕсене; усă куракан вариативлă вĕренӳ программисем ыйтнине; вĕренӳ ĕç-хĕлне хутшăнакансен (ачасемпе вĕсен çемйисем, педагогсем, организацири ытти сотрудниксем, сетьри çыхăнăва хутшăнакансем тата ыт. те) мехелĕсемпе туртăмĕсене шута илмелле.

Аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕ – вĕренӳ уçлăхĕн пайĕ. Унта ятарласа йĕркеленĕ хутлăх (Организацири пӳлĕмсем, Программăна пурнăçлама май паракан ун таври территори), материалсем, хатĕрсем, электрон вĕренӳ ресурсĕсем кĕреççĕ. Çавăн пекех ачасен аталăнăвĕнчи кăлтăкĕсене тӳрлетме май паракан, шкулчченхи ачасен вĕренĕвĕпе

ăспарăвĕнче, вĕсен сывлăхне упрас тата çирĕплетес ĕçре усă куракан хатĕрсем те.

Стандартпа килĕшӳллĕн аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕн тĕрлĕ вариантне йĕркелме пулать. Анчах кун пек чухне Программăн тĕллевĕсемпе принципĕсене, пĕтĕмĕшле вĕренӳ программине пурнăçлама кирлĕ ӳсĕм тата ар уйрăмлăхĕсене шута илмеллине асра тытмалла.

Стандартпа килĕшӳллĕн Организацин аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕ çаксене пурнăçлама май памалла:

– ачасен ӳт-пӳ тата психика сывлăхне, кăмăл-туйăм хăтлăхне упрасси тата çирĕплетессине, вăл шутра хутшăну социализаци уйрăмлăхĕпе интернет-ресурссен хăрушлăхĕсене шута илсе те; ачасен харкамлăх тăнăçлăхне, вĕсен кăмăл-туйăмне, туртăмĕсене хисеплессине; хăйсене тиркевсĕр хаклама, харкам мехелĕсемпе пултарулăхĕсене шанма вĕрентессине, вăл шутра ачасем пĕр-пĕринпе пĕрлĕхлĕ ĕçре хутшăнса-çыхăнса хутшăнассине те;

– организациri аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕн вĕрентӳ мехелĕпе май килнĕ таран ытларах усă курассине;

– ачасене кирлĕ материалсем , активлăх тĕсĕсене, пĕрлехлĕ ĕç-хĕле тата тĕрлĕ ӳсĕмри ачасен хутшăнăвне хутшăнакансене, тĕрлĕ ушкăнри ачасемпе тата аслисемпе йĕркеленĕ хутшăнăва хутшăнакансене суйлама; çавăн пекех хăйсен кăмăл-туйăмне, шухăшĕсене палăртма май паракан вариативлă аталантаруллă вĕренӳ йĕркелессине;

– педагогсен кулленхи ĕç-хĕлне йĕркелеме, хăйсен профессионализмне пĕр вĕçĕм ӳстерме, аталантарма хавхалантаракан условисем тăвассине;

– шкулчченхи вĕренӳ уçăмлă, уçă пулмаллине; ашшĕ-амăшне (саккунлă представительсене) вĕренӳ ĕç-хĕлне явăçтармаллине; вĕсене ачисене вĕрентес, ăс парас, пепкисен сывлăхне упрас тата çирĕплетес ĕçре пулăшмаллине; вĕсене çемьери вĕренӳ пуçарăвĕсенче пулăшмаллине;

– вĕренӳ ĕç-хĕлĕсене ачасемпе çитĕннисен, кашни ачан харкам тăнăçлăхне, интересĕсемпе мехелĕсене, вĕсен аталану социаллă лару-тăрăвне, ӳсĕм тата харкам уйрăмлăхĕсене шута илсе (ачасен аталанăвне юри васкатма та, юри чарса пыма та юрамасть) калăпланă хутшăнăвĕ çинче никĕсленсе йĕркелессине;

– тĕрлĕ тĕне ĕненекен, тĕрлĕ социаллă сийсенчен тухнă, вăл шутра сывлăх тĕлĕшĕнчен кăлтăк пур ачасене те, Организацире пурнăçланса пыракан тĕрлĕ вĕренӳ программине пурнăçа кĕртсе пыма пĕр тан условисем туса парассине;

Аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхĕ – вĕренӳпе ăспару тата сăлтавлас функцисене пурнăçлакан уçă система. Вăл хутлăх аталантарullă пулмалла, хăй те куллен аталанса пымалла.

Организацин аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхĕ ачан тĕрлĕ активлăхне тивĕçтерме пултармалла, вăл шутра ачасен социализаци уйрăмлăхĕсене асра тытса та: вăйăллă хутшăну, вăйă, пĕлӳлĕх, тĕпчев, хускану, конструировани; сăмах, кĕвĕ, ӳнер искусствисен хайлавĕсене йышăнни тата ыт. те., çак тĕллевпе кашни ачан тĕрлĕ тапхăрти туртăмĕсене, вĕсен сывлăхне упрасси-çирĕплетессине, кăлтăкĕсене тӳрлемелли майсене шута илсе.

Организацин аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхне педагогсем кашни ачан харкамлăхне, унăн мехелĕсене, активлăх шайĕпе интересĕсене шута илсе унăн аталанăвĕн харкам траекторине калăплама йĕркелеççĕ.

Ку задачăна пурнăçлама аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхĕ çакăн пек пулмалла:

*1) шалаш тĕлĕшĕнчен пуян* – унта тĕрлĕ категоринчи ачасен вăйă, пĕлӳлĕх, тĕпчев тата ăславлăх активлăхне тивĕçтерекен вĕренӳ хатĕрĕсем (вăл шутра техникăпа информаци хатĕрĕсем те), материалсем (вăл шутра усă курса юрăхсăра кăлармаллисем те), инвентарь, вăйă, спорт тата сывлăха çирĕплетмелли оборудовани, эксперимент тумалли материалсем, ачасен хускану активлăхне (вăл шутра шултра тата вĕтĕ моторикăна аталантараканнисем те), вăйăсемпе ăмăртусене хутшăнма кирлĕ хатĕрсем. Çак аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхенче ачасем хăйсене хăтлă туймалла, хăйсен мехелĕсемпе пултарулăхĕсене кăтартма пултармалла.

*2) кирлĕ чухне улăштарма пулни* – вĕренӳри лару-тăрăва, ачасен интересĕсемпе мехелĕсем урăхланнине кура, улăштарма май пулмалла.

*3) нумай функциллĕ* – аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхăн элеменчĕсемпе тĕрлĕ ача-пăча активлăхĕнче тĕрлĕрен усă курма май пулмалла. Тĕслĕхрен, ача-пăча сĕтел-пуканĕ, матсем, çемçе модульсем, ширмăсем, çут çанталăк материалĕсем.

*4) пурте усă курма май пурри* – тĕп ача-пăча активлăхне тивĕçтерекен теттесемпе, вăйăсемпе, материалсемпе тата пособисемпе пур вĕренекенсене те, вăл шутра сывлăх тĕлĕшĕнчен кăлтăк пур ачасене те, ирĕклĕ усă курма майсем туса памалла.

*5) хăрушсăр пулни* – аталантарullă яpаласемпе талккăш хутлăхĕн пур элеменчĕсемпе шанчăклă усă курма хăрушсăр пулмалла, вĕсем санитарипе эпидемиологи правилисемпе нормативĕсене, пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене тивĕçтермелле.

Аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхне проектланӑ чухне Стандартра палӑртнӑ вӗренӳ уҫлӑхӗсенчи – социаллӑ хутшӑну, пӗлӳлӗх, пуплев, ӳнерпе илем, ӳт-пӳ – вӗренӳ процесӗ пӗрлӗхлӗ пулмаллине шута илмелле.

*Социаллӑ хутшӑну уҫлӑхӗнчи вӗренӳ ӗҫ-хӗлне йӗркелеме ҫакӑ кирлӗ:*

Ушкӑнсен тата ачасен вӗренӳ ӗҫ-хӗлне йӗркелемелли ытти пӳлӗмсенче (музыка, спорт залӗсем, хӗллехи сад, изостуди, тата ыт. те) ачасене ҫитӗннисемпе те, тантӑшӗсемпе те тӗрлӗрен ушкӑнланса пӗрле хутшӑнма тата ӗҫлеме майсем туса параҫҫӗ. Ачасен хӑйсен интересӗсене кура выляма, тата вӗсемпе занятисем ирттерме пӗтӗм ушкӑнпа та, пӗчӗк ушкӑнсене те пуҫтарӑнма майсем пулмалла.

Ачасен Организацин инфраструктурин пӗтӗм объекчӗсемпе, ҫавӑн пекех тӗп ача-пӑча активлӑхне тивӗҫтерекен вӑйӑсемпе, теттесемпе, материалсемпе, пособисемпе инкексӗр, чӑрмавсӑр усӑ курма май пулмалла.

Организацири аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗнче пур вӗренекен те, вӑл шутра сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем те, хӑйсене хӑтлӑ туймалла.

Сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасем валли Организацире вӗсене тӗрлӗ ӗҫ-хӗлте тӑрӑшма, тантӑшӗсемпе хутшӑнма-выляма май паракан ятарлӑ сӗтел-пукан пулмалла. Ҫак ятарлӑ оборудованине лартма Организацин пӳлӗмӗсенче вырӑн ҫителӗклӗ пулмалла.

Организацири аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗ сывлӑх тӗлӗшӗнчен кӑлтӑк пур ачасене ӳт-пӳ тата психика тӗлӗшӗнчен аталанма, вӗсен сывлӑхне упрама-ҫирӗплетме, кӑлтӑкӗсене тӳрлетме-саплаштарма кирлӗ условисем туса памалла. Ҫакӑн валли ушкӑнсен пӳлӗмӗсемпе ытти пӳлӗмсенче ачасене ирӗклӗ ҫӳреме ҫителӗклӗ вырӑн пулмалла. Ҫавӑн пекех пӳлӗмсенче ачасен хускану активлӑхне тивӗҫтерме ятарлӑ лаптӑксем уйӑрмалла: чупма, сикме, пеме, ҫӳлелле хӑпарма тата ыт. те.

Организацире ачасен шултра моторикине тата хускану активлӑхне аталантармалли оборудовани, инвентарь, материалсем; вӗтӗ моторикине аталантармалли материалсемпе пособисем пулмалла.

Организацире ачасен сывлӑхне тӗрӗслемелли медицина процедурисем, тӳрлетӳ тата профилактика мероприятийӗсем иртермелли условисем тумалла.

Организицири аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗ ачасене хӑйсене кӑмӑл-туйӑм тӗлӗшӗнчен хӑтлӑ туйма, педагогика сотрудникӗсене тухӑҫлӑ ӗҫлеме кирлӗ условисене тивӗҫтермелле.

Аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗ ачасен вӑйӑ, пӗлӳ-тӗпчев ӗҫ-хӗлӗсене йӗркелеме кирлӗ условисене тивӗҫтермелле.

Ку тӗлӗшпе ушкӑнсен пӳлӗмӗсемпе территорине кӗрекен талккӑша тӗплӗн шутласа йӗркелемелле. Унта ачасем тӗрлӗ вӑйӑ, вӑл шутра сюжетлӑ-рольлисене те, выляма пултарччӑр. Ҫав пӳлӗмсенче сюжетлӑ-рольлӗ тата дидактика вӑййисене выляма оборудовани, теттесем, материалсем, вӑл шутра улӑштару япалисем те, пулмалла.

Организацири аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗ ачасен пӗлӳ-тӗпчев аталӑнӑвӗ валли кирлӗ условисене тивӗҫтермелле. Ҫак тӗллевпе тӗрлӗ оборудованипе, информаци ресурсӗсемпе, ачасен пӗлӳлӗх ӗҫ-хӗлне йӗркелемелли приборсемпе тата материалсемпе тивӗҫтернӗ пӳлӗмсемпе лаптӑксем уйӑрмалла – кӗнекесен кӗтесӗ, библиотека, хӗллехи сад, пахча, чӗрчунсен кӗтесӗ тата ыт.те.

Аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхӗ ачасен ӳнер тата илем аталанӑвӗшӗн кирлӗ условисене тивӗҫтермелле. Организацири пӳлӗмсене тата территорине кӗрекен талккӑша илемлетмелле; ачасен ӳнер, кӗвӗ, театр ӗҫ-хӗлӗсем валли ятарлӑ оборудованипе тата материалсемпе тивӗҫтернӗ пӳлӗмсемпе лаптӑксем уйӑрмалла.

Организацире вӗренӳ процесне информатизацилемелли условисем пулмалла.

Аталантаруллӑ япаласемпе талккӑш хутлӑхне ашшӗ-амӑшӗ (саккунлӑ представительсем) ҫемье условисенче те йӗркелеме пултараҫҫӗ. Ҫакна тума вӗсен, ҫемьепе обществӑлла ӑспару пӗрлӗхне тытса пырас тесе, хӑйсен ачи ҫӳрекен Организацин вӗренӳ программипе паллашмалла. Вӗренӳ программипе паллашни ҫемьепе Организаци хутшӑнӑвне ӑнӑҫлӑрах, тухӑҫлӑрах тӑвать.

### 3.3. Программӑна пурнӑҫлама май паракан кадр условийӗсем[1]

### 3.4. Программӑна пурлӑхпа техника енчен тивӗҫтерни

### 3.5. Программӑна пурнӑҫлама укҫа-тенкӗпе тивӗҫтерни

### 3.6. Вӗренӳ ӗҫ-хӗлне планлани

Программа вӗренӳ процесне йӗркелессине те, вӗренӳ ӗҫ-хӗлне календарьпе килӗшӳллӗ планлассине те хытарса калӑпламасть. Программа мӗнле условисенче пурнӑҫланса пынине, ачасемпе вӗсен ҫемйисен,

---

[1] *Аяларах кӑтартнӑ пайсенчи материалпа ҫак программӑра тупса паллашма пулать: Примерная основная образовательная программа дошкольного образования. Одобрена решением федерального учебно-методического объединения по общему образованию (протокол от 20 мая 2015 г. № 2/15)*

педагогсемпе Организацири ытти сотрудниксен мехелĕсемпе туртăмĕсене, интересĕсемпе пуçарăвĕсене шута илсе Организаци вĕсен ĕçне-хĕлне майларах йĕркелеме уçлăх хăварать.

Программăна пурнăçа кĕртекен Организацисенчен календарлă вĕренӳ графикĕсем (вĕсене çулталăк тата ытти йышши планпа çирĕппĕн çыхăнтарса), Программăн шалаш компоненчĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе калапланă, календарьпе çыхăннă ĕç программисем ыйтма юрамасть.

Педагогсен ĕç-хĕлне планласси ачасен харкам аталанавĕн результачĕсен педагога хаклавĕ çинче никĕсленет, чăн малтан вăл кашни ачана ăнăçлă аталанса пыма май паракан психологипе педагогика условийĕсем йĕркелессипе, вăл шутра аталантаруллă япаласемпе талккăш хутлăхĕ калăплас ĕç-хĕлпе те çыхăнать.

Организаци ĕç-хĕлне планлани ăна малалла аталантарма тĕллеттермелле, çакна май Организацин программи епле пурнăçланса пынин шалаш тата тулаш хаклавĕсене шута илмелле.

Организаци планĕсен çавăн пек тĕслĕхĕсене вĕренӳ программисенче панă (Пăхăр: п. 3.10. Литература çăл куçĕсен списокĕ).

### 3.7. Кун йĕркипе режимĕ

Программа Организацине кун йĕркипе ĕç режимне Организацин программине пурнăçа кĕртсе пымалли условисене, вĕренӳ ĕç-хĕлне хутшăнакансен кăмăл туртăмĕсемпе вĕсем ыйтнине, пурнăçа кĕртекен авторла вариативлă программăсен, вăл шутра шкулчченхи хушма вĕренӳ программин те, уйрăмлăхĕсене, çавăн пекех санитари тата эпидемиологи требованийĕсене шута илсе харкам тĕллĕн палăртма ирĕк парать.

### 3.8. Программăна аталантарас тата лайăхлатас, ăна нормăпа право, укçа-тенкĕ, ăслăлăхпа меслетлĕх, кадрсем, информци тата техника ресурсĕсем тĕлĕшĕнчен тивĕçттерес ĕçсен малашлăхĕ[2]

---

[2] *Аяларах кăтартнă пайри материалпа çак программăра тупса паллашма пулать: Примерная основная образовательная программа дошкольного образования. Одобрена решением федерального учебно-методического объединения по общему образованию (протокол от 20 мая 2015 г. № 2/15)*

## 3.9. Норма тата нормӑпа меслетлӗх докумечӗсем

1. Конвенция о правах ребенка. Принята резолюцией 44/25 Генеральной Ассамблеи от 20 ноября 1989 года.— ООН 1990.

1. Федеральный закон от 29 декабря 2012 г. № 273-ФЗ (ред. от 31.12.2014, с изм. от 02.05.2015) «Об образовании в Российской Федерации» [Электронный ресурс] // Официальный интернет-портал правовой информации: — Режим доступа: pravo.gov.ru..

2. Федеральный закон 24 июля 1998 г. № 124-ФЗ «Об основных гарантиях прав ребенка в Российской Федерации».

3. Распоряжение Правительства Российской Федерации от 4 сентября 2014 г. № 1726-р о Концепции дополнительного образования детей.

4. Распоряжение Правительства Российской Федерации от 29 мая 2015 г. № 996-р о Стратегии развития воспитания до 2025 г.[Электронный ресурс].— Режим доступа:http://government.ru/docs/18312/.

5. Постановление Главного государственного санитарного врача Российской Федерации от 19 декабря 2013 г. № 68 «Об утверждении СанПиН 2.4.1.3147-13 «Санитарно- эпидемиологические требования к дошкольным группам, размещенным в жилых помещениях жилищного фонда».

6. Постановление Главного государственного санитарного врача Российской Федерации от 15 мая 2013 г. № 26 «Об утверждении СанПиН 2.4.1.3049-13 «Санитарно- эпидемиологические требования к устройству, содержанию и организации режима работы дошкольных образовательных организаций» // Российская газета. – 2013. – 19.07(№ 157).

7. Постановление Главного государственного санитарного врача Российской Федерации от 3 июня 2003 г. № 118 (ред. от 03.09.2010) «О введении в действие санитарно- эпидемиологических правил и нормативов СанПиН 2.2.2/2.4.1340-03» (вместе с «СанПиН 2.2.2/2.4.1340-03. 2.2.2. Гигиена труда, технологические процессы, сырье, материалы, оборудование, рабочий инструмент. 2.4. Гигиена детей и подростков. Гигиенические требования к персональным электронно-вычислительным машинам и организации работы. Санитарно-эпидемиологические правила и нормативы», утв. Главным государственным санитарным врачом Российской Федерации 30 мая 2003 г.) (Зарегистрировано в Минюсте России 10 июня 2003 г., регистрационный № 4673)

8. Приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от17 октября 2013г.

9. № 1155 «Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта дошкольного образования» (зарегистрирован Минюстом России 14 ноября 2013г., регистрационный № 30384).Приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от6 октября 2009 г.

10. № 373 (ред. от 29.12.2014) «Об утверждении и введении в действие федерального государственного образовательного стандарта начального общего образования» (зарегистрирован Минюстом России 22 декабря 2009 г., регистрационный № 15785).

11. Приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от 17 декабря 2010 г. № 1897 (ред. от 29.12.2014) «Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта основного общего образования» (зарегистрирован Минюстом России 1 февраля 2011 г., регистрационный № 19644).

12. Приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от 17 мая 2012 г.

13. № 413 (ред. от 29.12.2014) «Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта среднего общего образования» (зарегистрирован Минюстом России 7 июня 2012 г., регистрационный № 24480).

14. Приказ Минздравсоцразвития России от 26 августа 2010 г. № 761н (ред. от 31.05.2011)

15. «Об утверждении Единого квалификационного справочника должностей руководителей, специалистов и служащих, раздел «Квалификационные характеристики должностей работников образования» (Зарегистрирован в Минюсте России 6 октября 2010 г. № 18638)

16. Письмо Минобрнауки России «Комментарии к ФГОС ДО» от 28 февраля 2014 г. № 08- 249 // Вестник образования.– 2014. – Апрель. – № 7.

17. Письмо Минобрнауки России от 31 июля 2014 г. № 08-1002 «О направлении методических рекомендаций» (Методические рекомендации по реализации полномочий субъектов Российской Федерации по финансовому обеспечению реализации прав граждан на получение общедоступного и бесплатного дошкольного образования).

## 3.10. Литература çăл кусĕсем

При разработке Программы использовались следующие литературные источники, представленные в данном перечне в порядке, учитывающем значимость и степень влияния их на содержание Программы.

1. Амонашвили Ш.А. Основы гуманной педагогики. В 20 кн. Кн. 6. Педагогическая симфония. Ч. 1. Здравствуйте, Дети! / Шалва Амонашвили. — М. : Амрита, 2013.

2. Антология дошкольного образования: Навигатор образовательных программ дошкольного образования:сборник. – М.: Издательство «Национальное образование», 2015.

3. Асмолов А.Г. Оптика просвещения: социокультурные перспективы. – М.: Просвещение, 2015.

4. Асмолов А.Г. Психология личности. Культурно-историческое понимание развития человека. – М., Академия, 2011.

5. Бостельман А., Финк М. Применение портфолио в дошкольных организациях: 3–6 лет. – М.: Издательство «Национальное образование», 2015.

6. Венгер Л.А. Восприятие и обучение. – М., 1969.

7. Веракса Н.Е. и др. Познавательное развитие. – М.: Мозаика-синтез, 2014.

8. Выготский Л.С. Мышление и речь // Собр. соч.: В 6 т. – Т. 2. – М.: Педагогика,1982. 1986.

9. Запорожец А.В. Избранные психологические труды: в 2 т. – М.: Педагогика,

10. Инклюзивная практика в дошкольном образовании: методич. пособие дляпедагогов дошк. учреждений / под ред. Т.В. Волосовец, Е.Н. Кутеповой. – М.: Мозаика-Синтез, 2011.

11. Короткова Н.А., Нежнов П.Г. Наблюдение за развитием детей в дошкольных группах / Изд. 3-е, дораб. – М.: Линка-Пресс, 2014.

12. Корчак Януш. Как любить ребенка / Януш Корчак; пер. с польск. К.Э. Сенкевич. – Москва: АСТ, 2014. (Библиотека Ю. Гиппенрейтер).

13. Корчак Януш. Уважение к ребенку. –СПб.: Питер, 2015.

14. Кравцов Г.Г., Кравцова Е.Е. Психология и педагогика обучения дошкольников: учеб. пособие. – М: Мозаика-Синтез, 2013.

15. Кривцова С.В. Патяева Е.Ю.Семья. Искуство общения с ребенком / под ред. А.Г. Асмолова. – М.: Учебная книга БИС, 2008.

16. Кудрявцев В.Воображение, творчество и личностный рост ребёнка / Владимир Товиевич Кудрявцев.– М.: Чистые пруды, 2010. (Библиотечка «Первого сентября”, серия «Воспитание. Образование. Педагогика”. Вып. 25).

17. Леонтьев А.Н. Психологические основы развития ребенка и обучения. – М.: Смысл, 2012.

18. Лисина М.И. Формирование личности ребенка в общении. – СПб.: Питер, 2009.

19. Манске К. Учение как открытие. Пособие для педагогов. – М.: Смысл, 2014.

20. Мид М. Культура и мир Детства. – М., 1988.

21. Михайленко Н.Я., Короткова Н.А. Организация сюжетной игры в детском саду. – М., 2009.

22. Михайленко Н.Я., Короткова Н.А. Ориентиры и требования к обновлению содержания дошкольного образования: метод. рекомендации. – М., 1993.

23. Михайлова-Свирская Л.В. Индивидуализация образования детей дошкольного возраста. Пособие для педагогов ДОО (0–7 лет). – М.: Просвещение, 2014.

24. Навигатор образовательных программ дошкольного образования [Электронный ресурс].─ Режим доступа:http://Navigator.firo.ru.

25. Уденховен Н. ван, Вазир Р. Новое детство. Как изменились условия и потребности жизни детей. – М.: Университетская книга, 2010.

26. Обухова Л.Ф. Возрастная психология: учеб. для вузов: гриф МО, М.: Юрайт,

27. 2014.

28. Патяева Е.Ю. От рождения до школы. Первая книга думающего родителя. –М.:

29. Смысл, 2014.

30. Педагогика достоинства: идеология дошкольного и дополнительного образования. – М.: Федеральный институт развития образования, 2014.

31. Поддьяков А.Н. Исследовательское поведение. 2-е изд. испр. и доп. – М.: Издательство «Национальное образование», 2015.

32. Поддьяков Н.Н. Психическое развитие и саморазвитие ребенка-дошкольника. Ближние и дальние горизонты. – М., 2013.

33. Стеркина Р.Б., Юдина Е.Г., Князева О.Л., Авдеева Н.Н.,. Галигузова Л.Н, Мещерякова С.Ю. Аттестация и аккредитация дошкольных образовательных учреждений. – М., АСТ, 1996.

34. Ушинский К. Человек как предмет воспитания Т. 1 Опыт педагогической антропологии / Константин Ушинский. – М., 2012. – 892 с.

35. Шкалы для комплексной оценки качества образования в дошкольных образовательных организациях / под ред. В.К. Загвоздкина, И.В. Кириллова. – М.: Издательство

36. «Национальное образование», 2015. – 116 с.

37. Шулешко Е. Понимание грамотности. О педагогическом решении проблем преемственности в начальном образовании детей от пяти до одиннадцати лет. Книга первая. Условия успеха. Общая организация жизни детей и взрослых в детском саду и начальной школе, их взаимоотношений вне занятий и на занятиях по разным родам деятельности / Под ред. А. Русакова. – СПб.: Образовательные проекты, Участие, Агентство образовательного сотруднгичества, 2011. – 288 с.

38. Эльконин Д.Б. Детская психология: учеб. пособие для студ. высш. учеб. заведений / Д.Б. Эльконин; – 4-е изд., стер. – М.: Издательский центр «Академия», 2007. – 384 с.

39. Эльконин Д.Б. Избранные психологические труды. – М., 1989.

40. Эльконин Д.Б. Психология игры. – М., Владос, 1999.

41. Эриксон Э. Детство и общество / 2-е изд., перераб. и доп.; пер. с англ. – СПб.: Ленато: АСТ: Фонд «Университетская книга», 1996.

42. Юдина Е.Г., Степанова Г.Б., Денисова Е.Н. (Ред. и введение Е.Г. Юдиной) Педагогическая диагностика в детском саду. – М.: Просвещение, 2005.